Ц. Б. им.
0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ЙАНВАР 14 ЕРНЕКУН
11 (4824)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

20-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 0—23

ССР СОЙУЗĔН ПĔРРЕМĔШ СОЗЫВРИ АСЛĂ СОВЕЧĔН ПĔРРЕМĔШ ÇЕÇÇИЙĔ

Сойуз Совечĕн 1938 çулхи йанварĕн 12-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен информацилĕ пĕлтерÿ

Йанварĕн 12-мĕшĕнче кăнтăрла 4 сехетре Сойуз Совет ларăвĕсен залĕнче Кремльре Сойуз Совечĕн Çеççийĕ уçăлнă.

Депутат **Н. С. Хрушчев** йулташ сĕнÿвĕ тăрăх Çеççине Сойуз Совечĕн чи ватă депутачĕ академик **Алексей Николайевич Бах** уçать.

Бах йулташăн кĕске сăмахĕ хыççăн Сойуз Совечĕ Сойуз Совечĕн Председательне заместителĕсене суйлама пуçлать.

Сойуз Совечĕн Председательне пурте пĕр сасăпа **Андрей Андрейевич Андрейев** йулташа суйланă; Председател заместителĕсене **Трофим Денисович ЛЫСЕНКО** тата **Султан СЕГИЗБАЙЕВ** йулташсене суйланă.

Сойуз Совечĕ Çеççи ĕçĕн регламентне çапла йышăннă:

1. Сойуз Совет Çеççин ларăвĕсем ирхине 11 сехетрен пуçласа кăнтăрла 3 сехетчен пулса иртеççĕ.

2. Сойуз Совет Çеççин кун йĕркинчи ыйтусем тăрăх доклад тума докладчиксене Сойуз Совечĕн Председателĕ çирĕплетет.

3. Сойуз Совет депутачĕсен кашни ушкăнĕ, унта 50 çынран кайа мар шутланать пулсан, хăйĕн содокладчикне тăратма пултарать.

4. Доклад тума докладчиксене пĕр сехет тата йулашкинчен калама—вăтăр минут параççĕ, содоклад тума содокладчиксене—30 минут, йулашкинчен калама—вуншилĕк минут параççĕ.

5. Ораторсене сăмах калама малтанхи хут çирĕм минут тата иккĕмĕш хут тухса калама—шилĕк минут параççĕ.

6. Харпăрхăй паракан зайавленисемпе фактăлă справкăсене хут çине çырса памала, вĕсене Сойуз Совет Председателĕ алла илнĕ хыççăнах йе, вĕсен содержанине кура, лару пĕтсен вуласа кăтартать.

7. Черетсĕр ыйтусене хут çине çырса памала, вĕсене Сойуз Совет Председателĕ çийĕнчех вуласа кăтартать.

8. Кун йĕрки çинчен калама 5 минут параççĕ.

9. Сасăласси çинчен калама 3 минут параççĕ.

Ленинград, Мускав, Кийев тата Тбилиси депутачĕсен ушкăнĕнчен депутат **А. А. ЖДАНОВ** йулташ панă сĕнÿ тăрăх Сойуз Совечĕ çакăн пек кун йĕрки йышăннă:

1. Сойуз Совечĕн Мандат Комиççине суйласси;

2. Сойуз Совечĕн йаланлăх комиççийĕсем çинчен;

3. ССР Сойуз Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă решенисене май, ССР Сойуз Конституцин хăшпĕр статйисене улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен;

4. ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиумне суйласси—

а) ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиумĕн председательне,
б) ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиумĕн Председател заместителĕсене,
в) ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиумĕн Секретарне,
г) ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиумĕн членĕсене суйласси;

5. ССР Сойузĕн Правителствине—ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советне туса хурасси;

6. ССР Сойузĕн Прокурорне уйăрса лартасси;

7. Депутатсене хăйсен депутат обйазаннăçĕсене пурнăçа кĕртнипе сыхăнса тăракан расхутсене тÿлесси çинчен.

Сойуз Совечĕ Сойуз Совечĕпе Национаљнăççен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕнче çак пунктсене пăхса тухма постановлени йышăннă:

3. ССР Сойуз Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă решенисене май, ССР Сойуз Конституцин хăшпĕр статйисене улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен;

4. ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиумне суйласси;

5. ССР Сойузĕн Правителствине—ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советне туса хурасси;

6. ССР Сойузĕн Прокурорне уйăрса лартасси.

Сойуз Совет депутачĕсен полномочийĕсене тĕрĕслеме çак çынсенчен Мандат Комиççи суйланă:

Мандат Комиççи председателĕ—**А. С. ЩЕРБАКОВ** йулташ;

Мандат Комиççи членĕсем;

А. М. АЛЕМАСОВ
Ф. В. ШАГИМАРДАНОВ
ХУДАЙ-БЕРГЕНОВ АИТБАЙ
К. И. НИКОЛАЙЕВА
А. Е. КОРНЕЙЧУК
М. Д. ДУКАНОВ
Н. И. СУГОНЬАКА
УТЕГАЛИЙЕВ Кулжан
Г. А. АРУТЮНЬАН
КУЛИЙЕВ Теймур Имам Кули оглы.

Мандат Комиççи суйланă хыççăн Сойуз Совечĕн пĕрремĕш ларăвĕ хупăнать.

Национаљнăççен Совечĕн 1938 çулхи йанварĕн 12-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен информацилĕ пĕлтерÿ

Йанварĕн 12-мĕшĕнче каçхине 8 сехетре Национаљнăççен Совет ларăвĕсен залĕнче Кремльре Национаљнăççен Совечĕн Çеççийĕ уçăлнă.

Депутат **Г. И. ПЕТРОВСКИЙ** йулташ сĕнÿвĕ тăрăх Çеççине Национаљнăççен Совечĕн чи ватă депутачĕ **М. Г. ЦХАКАЙА** йулташ уçать.

ЦХАКАЙА йулташăн кĕске сăмахĕ хыççăн, Национаљнăççен Совечĕ Национаљнăççен Совечĕн Председателĕпе заместителĕсене суйлама пуçлать.

Национаљнăççен Совечĕн Председательне пурте пĕр сасăпа **Н. М. ШВЕРНИК** йулташа суйланă: Председателĕн заместителĕсене **Ч. А. АСЛАНОВА** тата **А. М. ЛЕВИЦКИЙ** йулташсене суйланă.

Национаљнăççен Совечĕ Çеççи ĕçĕн регламентне çапла йышăннă:

1. Национаљнăççен Совет Çеççин ларăвĕсем каçхине 6 сехетрен пуçласа 10 сехетчен пулаççĕ.

2. Национаљнăççен Совет Çеççин кун йĕркинчи ыйтувĕсем тăрăх доклад тума докладчиксене Национаљнăççен Совечĕн Председателĕ çирĕплетет.

3. Национаљнăççен Совет депутачĕсен кашни ушкăнĕ, унта 50 çынран кайа мар шутланать пулсан, хăйĕн содокладчикне тăратма пултарать.

4. Доклад тума докладчиксене пĕр сехет тата йулашкинчен калама 30 минут параççĕ, содоклад тума содокладчиксене—30 минут, йулашкинчен калама — 15 минут параççĕ.

5. Ораторсене сăмах калама малтанхи хут 20 минут тата иккĕмĕш хут 5 минут параççĕ.

6. Харпăрхăй паракан зайавленисемпе фактăлă справкăсене хут çине çырса памала, вĕсене Национаљнăççен Совет Председателĕ алла илнĕ хыççăнах йе, вĕсен содержанине кура, лару пĕтсен вуласа кăтартать.

7. Черетсĕр ыйтусене хут çине çырса памала, вĕсене Национаљнăççен Совет Председателĕ çийĕнчех вуласа кăтартать.

8. Кун йĕрки çинчен калама 5 минут параççĕ.

9. Сасăласси çинчен калама 3 минут параççĕ.

РСФСР, Казахстан тата Белоруççи депутачĕсен ушкăнĕнчен депутат **Н. А. БУЛГАНИН** йулташ панă сĕнÿ тăрăх, Национаљнăççен Совечĕ çакăн пек кун йĕрки йышăннă:

1. Национаљнăççен Совечĕн Мандат Комиççине суйласси;

2. Национаљнăççен Совечĕн йаланлăх комиççисене суйласси;

3. ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă решенисене май, ССР Сойуз Конституцин хăшпĕр статйисене улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен;

4. ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиумне суйласси—

а) ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиумĕн Председательне,
б) ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиумĕн Председател заместителĕсене,
в) ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиумĕн Секретарне,
г) ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Президиумĕн Членĕсене суйласси;

5. ССР Сойузĕн Правителствине — ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советне туса хурасси;

6. ССР Сойузĕн Прокурорне уйăрса лартасси;

7. Депутатсене хăйсен депутат обйазаннăçĕсене пурнăçа кĕртнипе çыхăнса тăракан расхутсене тÿлесси çинчен.

Сойуз Совечĕпе Национаљнăççен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕнче çак пунктсене пăхса тухма постановлени йышăннă:

3. ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă решенисене май, ССР Сойуз Конституцин хăшпĕр статйисене улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен.

4. ССР Сойуз Аслă Совечĕн Президиумне суйласси.

5. ССР Сойузĕн Правителствине—ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советне туса хурасси.

6. ССР Сойузĕн Прокурорне уйăрса лартасси.

7. Депутатсене хăйсен депутат обйазаннăçĕсене пурнăçа кĕртнипе çыхăнса тăракан расхутсене тÿлесси çинчен.

Национаљнăççен Совет депутачĕсен полномочийĕсене тĕрĕслеме çак çынсенчен Мандат Комиççи суйланă:

1. Мандат Комиççи председателĕ Садык Нурпеисов—Петропавловский хула округĕнчен суйланă депутат, Казах ССР.

Мандат Комиççин членĕсем:

2. Матвей Федорович Шкирйатов—Тула-Рйазань округĕнчен суйланă депутат.

3. Александр Йефимович Никитин—Кантский округран суйланă депутат, Киргиз ССР.

4. Мацак Петросович Папйан—Степанаванский округран суйланă депутат, Армйан ССР.

5. Михаил Алексейевич Бурмистенко— Майкоп йал округĕнчен суйланă депутат, Адыгей Автономлă облăçĕ.

6. Семен Константинович Тимошенко—Харьков йал округĕнчен суйланă депутат, Украинă ССР.

7. Софийа Петровна Раченок—Слуцкий йал округĕнчен суйланă депутат, Белорус ССР.

8. Тусуп Кузембайев—Караганда округĕнчен суйланă депутат, Казах ССР.

9. Курбан Нийаз Поссы—Сталинский округран суйланă депутат, Туркмен ССР.

10. Акакий Алексейевич Хорава—Гегечкорский округран суйланă депутат, Грузин ССР.

11. Ибрагим Худайкулов—Катта Курганский округран суйланă депутат, Узбек ССР.

Малала Национаљнăççен Совечĕ Национаљнăççен Совечĕн йаланлăх комиççисен ыйтуне пăхса тухма пуçланă.

Депутатсен ушкăнĕнчен **Н. М. МАРЧАК** йулташ Законодатељнăй предположенисен комиççине тума сĕнÿ парать.

Национаљнăççен Совечĕ вунă çынтан Законодатељнăй предположенисен комиççи составне çирĕплетет.

Комиççи составне çак çынсем суйланаççĕ:

1. Комиççи председателĕ—Петр Андрейевич **ТЮРКИН**—Ленинград йал округĕнчен суйланă депутат.

Комиççи членĕсем:

2. Садык **НУРПЕИСОВ**—Петропавловский хула округĕнчен суйланă депутат, Казах ССР.

3. **ВЕЛИБЕКОВ** Риза Халил оглы—Вединский округран суйланă депутат, Армйан ССР.

4. Николай Алексейевич **ПЕТРУНИЧЕВ** — Звениговский округран суйланă депутат, Мари АССР.

5 Валентинă Федоровнă **ПИКИНА**—Йошкар Ола хула округĕнчен суйланă депутат, Мари АССР.

6 Калистрат Йефимович **НЕЗДЫМЕНКО** — Шепетовкă округĕнчен суйланă депутат, Украинă ССР.

7. Борис Йевгенийевич **ВЕДЕНЕЙЕВ**—Кандалакша округĕнчен суйланă депутат, Карел АССР.

8. **АЛИ ГУСЕЙНОВ** Ага Гусейн Мехти оглы—Касум-Измайловский округран суйланă депутат, Азербайджан ССР.

9 Владимир Георгийевич **ДЕКАНОЗОВ** — Ахалцыхский округран суйланă депутат, Грузин ССР.

10. Марийа Йаковлевна **ПЕТРОВА**—Калининский округран суйланă депутат, РСФСР.

Национаљнăççен Совечĕн Бюджет Комиççине туса хума депутат **А. И. СТЕЦКИЙ** йулташ сĕнÿ парать.

Национаљнăççен Совечĕ 13 çынтан Национаљнăççен Совечĕн Бюджет Комиççине суйлать:

1. Комиççи председателĕ Иван Сергейевич **ХОХЛОВ** — Мускав йал округĕнчен суйланă депутат, РСФСР.

Комиççи членĕсем:

2. Кирилл Василийевич **СУХОМЛИН**—Жмеринский округран суйланă депутат, Украинă ССР.

3. **ГУСЕЙНОВ** Орудж Вели Киши оглы—Кировобадский округран суйланă депутат, Азербайджан ССР.

4. Михаил Тимофейевич **ФИНОГЕНОВ**—Гомељский хула округĕнчен суйланă депутат, Белорус ССР.

5. Павел Иванович **КОРОБОВ**—Чељабинский округран суйланă депутат.

6. Семен Георгийевич **ХОШТАРИЙА**—Гагринский округран суйланă депутат, Абхаз АССР.

7. Мамет Ибрагимович **ИБРАГИМОВ**—Бахчисарайский округран суйланă депутат, Крым АССР.

8. Серакс **АТЛИЙЕВ**—Чарджоуский округран суйланă депутат, Туркмен ССР.

9. Пулат **БОБОКАЛАНОВ** — Ленинабадский йал округĕнчен суйланă депутат, Таджик ССР.

10. Керим **КЕНЕБОЙЕВ**—Кульчинский округран суйланă депутат, Киргиз ССР.

11. Татигали **КУЖАНОВ**—Айагузский округран суйланă депутат, Казах ССР.

12. Мухамеджан **ЙУЛДАШЕВ**—Ташкент округĕнчен суйланă депутат, Узбек ССР.

13. Петр Иванович **ШЛИЛЕВОЙ** Сталинский округран суйланă депутат, Украинă ССР.

Национаљнăççен Совечĕ, **О. Й. ШМИДТ** депутатăн Мускав, Тутар тата Ленинград депутачĕсен ушкăнĕн йачĕпе Йутçĕршыв ĕçĕсен Комиççине туса хума панă сĕнÿне йышăнать.

Национаљнăççен Совечĕ вунă члентан Национаљнăççен Совечĕн Йутçĕршыв ĕçĕсен Комиççине туса хума йышăнать:

1. Комиççи председателĕ—Николай Александрович **БУЛГАНИН**.

Комиççи членĕсем.

2. Алексей Михайлович **ЛЕВИЦКИЙ**—Витебский хула округĕнчен суйланă депутат, Белорус ССР.

3. Николай Макарович **МАРЧАК**— Кийев хула округĕнчен суйланă депутат, Украинă ССР.

4. Джурабек **ИСКАНДЕРОВ**—Канибадамский округран суйланă депутат, Таджик ССР.

5. Александр Николайевич **ПОСКРЕБЫШЕВ**—Белебейевский округран суйланă депутат, Башкир АССР.

6. Мацак Петросович **ПАПЙАН**—Степанаванский округран суйланă депутат, Армйан ССР.

7. Петр Афанасийевич **ВЕРШКОВ**—Тбилисири 26 коммунар йачĕпе тăракан округран суйланă депутат, Грузин ССР.

8. Соломон Абрамович **ЛОЗОВСКИЙ**—Молотовский округран суйланă депутат, Киргиз ССР.

9. Семен Константинович **ТИМОШЕНКО**—Харьков йал округĕнчен суйланă депутат, Украинă ССР.

10. Отто Йулийевич **ШМИДТ**—Хусан округĕнчен суйланă депутат, РСФСР.

Йаланлăх комиççисем суйланă хыççăн Национаљнăççен Совет Çеççин пĕрремĕш ларăвĕ хупăнать.

Çĕршывăн çĕрайĕсем хăйсен пуйанлăхне уçса параççĕ

1937 çулта туса иртернĕ геологи разведкисен малтанхи итогĕсем

Геологи разведкисемпе шыравăн çĕршер партийĕсем иртнĕ çулта совет çĕршывĕн талкăшĕсене тĕпчесе вĕренчĕç. Çул талăк хушшинче нумай пурлăхсем тупса палăртнă.

Геологи разведчикĕсен пысăк çĕнтерÿвĕ—хромитăлă рудасем пур вырăнсене тупса палăртни пулать. Актюбинск облăçĕнчи Новороссийск районĕнче кун пек вырăнсем 23 тупнă. Ку районра хромитăлă рудан геологилĕ пĕтĕм запасĕ 750.000 тоннă шутланать. Çавнашкалах тата хромитăлă рудан пысăк вырăнĕсене Уфалейск массивра (кăнтăр йенчи Урал) тупса палăртнă. Кунта хромитăлă рудан запасĕ 300.000 тоннăна йахăн, паха суртлă рудасен запасĕ 50.000 тоннă шутланать.

1937 çулхи ĕçсем Коми АСС Республикĕнчи Интовский вырăнти çĕр кăмрăкĕн запасĕ икĕ хута йахăн ытларах пулнине палăртнă. Печорăри кăмрăк бассейнинчи Чернайа йуханшыв çинче çĕнĕ кăмрăк районĕ тупса палăртнă. Малтанлăха шута илнĕ тăрăх, кунта çĕркăмрăкĕ пысăк талкăш çинче выртать. Казахстанри Мангыстау районĕнче виçĕ çĕнĕ кăмрăк участки тупнă. Иртнĕ çулхи разведкăсем Вăтам Азири Йагнобскри çĕр кăмрăк вырăнĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине çирĕплетнĕ. Киргиз СС Республикĕнчи Кок-Йангак районĕнче промышленнăçа кирлĕ кăмрăк нумайăшне тупса палăртнă. Çавнашкалах тата Инçет-Хĕвелтухăç крайĕнчи Хунгарийскра промышленнăçа кирлĕ хăмăр кăмрăк пуррине палăртнă.

Пысăк çитĕнÿсен шутне çавнашкалах тата Казахстанри Кара-Тау районĕнче паха суртлă фосфорит вырăнĕсем пуррине тупса палăртни кĕрет. Разведкă шутланă тăрăх, кунта фосфоритсен запасĕ 200 мĕлйун тоннă пур.

Тĕслĕ металлсен рудине шырас ĕç те лайăх иртнĕ. Армйан СС Республикинчи Чибухлинскра пăхăрлă пуйан вырăнсем тупса палăртнă. Казахстанра Мугаджарск сăрчĕсенче промышленнăçа кирлĕ пăхăр руди пуррине тупнă. Вăл рудара çавнашкалах тата ылттăн та пур.

Уралта Пашийскри цемент заводĕ çывăхĕнче промышленнăçа кирлĕ бокситсем пур вырăн тупса палăртнă. Красноярск крайĕнчи Балахтинск районĕнче плавикăлă шпатăн пысăк запасне тупнă.

(ТАСС).

Америкăра лăпкă саманашăн кĕрешекен йухăм вăйланать

НЬЙУ-ЙОРК, йанварĕн 10-мĕш. (ТАСС). Америкăри паллă деятелсем—профессорсем, писателсем, журналиссем, рабочи йухăмĕн лидерĕсем, йуриссем Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен правителствинчен лăпкă саманашăн пыракан йухăма йертсе пыма ыйтакан деклараци кăларнă. Вăл деклараци çине пин çын, вăл шутрах Йутçĕршыв ĕçĕсен министерĕ пулнă Стимсон, Америкăри ĕç федерацин председателĕ Грин тата ыттисем те алă пуснă. Тĕнчери катастрофăна,—тенĕ декларацире,—лăпкă саманана йуратакан çĕршывсем пĕрле ĕçлесен, пĕтĕм тĕнчери договорсене тытса пырсан, агрессăра нимĕнле пулăшу та пами пулсан тин чарса лартма пулать".

Нейтралитет политики тĕрĕс мар, тенĕ малала декларацире, вăл агрессора хавхалантарать çеç.

НЬЙУ-ЙОРК, йанварĕн 10-мĕш. (ТАСС). Америкăри ĕç федерацин председател заместителĕ Уолл федераци Китайа пулăшакан рабочи комитечĕ тунă, тесе пĕлтернĕ.

Çуракине хатĕрленеççĕ

Кивĕ Тутайкассинчи "Кунер" колхоз (Сĕнтĕрвăрри р-нĕ) иртнĕ çулта нихăçан пулман вăйлă тырпул туса илчĕ. Ку çитĕнÿсем агротехникăпа пусуçавăрнăшне тĕрĕс йĕркеленинчен пулнă. Колхозниксем те пуйан та культурлă пурнăçпа пурăнма пуçларĕç.

Колхозра тÿрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлекенсем 2—3 çул пурăнмалăх тырă илчĕç.

Акă Терентйев С. семйи 404 пăт, Никифоров семйи 357 пăт, Шангов Иван хăй пĕччен ĕçленипе 189 пăт, 18 çулхи Москирйаков Н.—176 пăт илчĕç.

Çакна шута илсе, колхозниксем 1938 çулта нихăçан пулман вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешĕве анлăн сăрса йачĕç.

Халĕ йалхуçалăх машинĕсене йусаса тасатса лартнă. Вăрлăхсене 100 процентчĕпех суртласа хунă. 769 лав тислĕкпе 52 лав торф кăларса, хутшăнтарса купаласа лартнă, 12 центнер кĕл тата 16 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пуххса хатĕрленĕ. Халĕ те тĕрлĕрен имçамсем пуххассипе уйрăм звеносем хастарлăн ĕçлеççĕ.

* * *

Атнашри Киров йачĕпе хисепленсе тăракан колхоз (Шăхасан р-нĕ) иртнĕ çулхи йалхуçалăх çулне пысăк ÿсĕмсем тунипе вĕçлерĕ. Киров йачĕпе тăракан колхоз районта пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Колхоз районта лайăх тĕслĕх кăтартни агротехникăна тĕрĕс пурнăçласа пынинчен килнĕ. 1-мĕш бригадă (бригадирĕ Степанова комсомолка) хăйĕн ĕçне йуратса ĕçленипе вăтам шутпа гектартан 47,80 центнер кĕрхи тулă туса илнĕ. Вăл хăйĕн ĕçĕн лайăх тĕслĕхĕпе районта чи малти вырăна тухрĕ.

Степанова йулташ кунпах лăпланса лармасть. Вăл 1938 çулта тата та вăйлăрах тырпул туса илсе, республикăра пĕрремĕш вырăна тухассишĕн кĕрешет. Вăл, колхозниксене вăйлă тырпулшăн мĕнле майпа кĕрешмелине каласа ăнлантарнă.

Колхоз пайанхи куна 4960 лав тислĕк, 4100 лав торф уйа кăларса хутăштарса купаласа лартнă.

Кунсăр пуçне тĕрлĕрен удобренисене: кĕл 120 центнер, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ—220 центнер, фекали 1100 центнер пухнă, 8 тоннă фосфорит çăнăхĕ кÿрсе килнĕ, 130 гектар çинче йур тытнă.

Кăçал çанталăк кирек-мĕнле пулсан та тырпул тухăçне иртнĕ çулхинчен 20 процент ÿстеретпĕр теççĕ колхозниксем.

* * *

Вăрнар районĕнчи „Çĕнĕ йал" колхоз ССР Сойузĕн Аслă Советне депутатсем суйланă хыççăн çитес çуракине хастарлăн хатĕрленме тытăнчĕ. Пайанхи куна 1500 лав тислĕк, 250 тоннă торф уйа кăларнă, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 10 центнер пухнă, йалхуçалăх машинĕсене пĕтĕмпех йусаса çитернĕ. Халĕ вăрлăха суртлас ĕçе тытăнчĕç.

Куславккапа Сĕнтĕрвăррисем мĕн шутлаççĕ

Вăрмарти сељхозснабжени уйрăмĕ Куславкка, Сĕнтĕрвăрри тата Вăрмар районĕсенче ĕçлет. Сељхозснабжени уйрăмĕ иртнĕ çулта районсенчи колхозсене ваљљи 30 пин центнера йахăн çĕре çемçетмелли тĕрлĕрен минераллă удобрени çăнăхĕсем кÿрсе килнĕ. Анчах колхозсем иртнĕ çулта ку удобренисемпе сахал усă курнă. Куславккапа Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсем турттарса кайман.

Пĕр Вăрмар районĕ çеç 7030 центнер илсе кайнă. Вăрмар районĕнче чылай колхозсем хăйсене панă плантан ирттерсех илеççĕ. Уйрăмах Тикашри „Бољшевик", Хĕрлĕ Çырти „Хĕрлĕ йалав", Çĕн Вĕренерти „Хĕрлĕ Мăрат" колхозсем хăйсен çĕрĕсене çемçетессишĕн тăрăшаççĕ. Çав хушăрах кайа йулса пыракан колхозсем те пур-ха.

Акă, „Ударник", „Пионер", Ворошилов йачĕпе тăракан колхозсенче çуракине бољшевикла иртерме хатĕрленмеççĕ.

А. Васильйев.

Социалисăмла ăмăртува анлăн сарар

Патăрйел Йелчĕксене ăмăртăва чĕнчĕ

ПАТĂРЙЕЛ („Чăваш Коммунĕ“ корр.) Çак кунсенче йалхуçалăх ĕçĕнчи ударниксемпе стахановецсен районри канашлувĕ пулса иртрĕ. Канашлу 1937 çулхи йалхуçалăх ĕçĕсен итогĕсемпе 1938 çулта вăйлă тырпулшăн кĕрешесси çинчен сÿтсе-йаврĕ. Патăрйел районĕ кăçал нихăçан пулман вăйлă тырпул—вăтам шутпа гектартан 124 пăт тĕштырă пухса илнĕ. Нумай колхозсем гектартан 130—140 пăт тата ытларах та пухса илнĕ. Çакăн пек вăйлă тырпула район машинă-тракторлă станцине пула, таса суртлă вăрлăхсем акнипе, минераллă тата вырăнти удобренисем çĕре нумай хывнипе, агротехникăна пурнăçа кĕртсе пырса, социалисăмла ăмăртура стахановла йухăма анлăн сарса йанипе туса илнĕ. Уйрăм колхозсемпе бригадăсем тата опытниксем вăйлă тырпулшăн калама çук тимлĕн тата пысăк вăй хурса ĕçленĕ.

Акă, Сталин йачĕпе тăракан колхозри Петухов бригадинчи звено 3,64 гектар çĕр çинче „Московский А—315“ суртлă сĕлĕ гектар пуçне 426 пăт туса илнĕ. „Правда“ колхозăн бригадирĕ Коргин йулташ 15 га çинчен кашни гектартан 232-шер пăт сĕлĕ туса илнĕ. „Çăлтăр“ колхозри звеновод Кузнецов Василий ырашпа тулă гибридне 9 га çинче кашни гектартан 220-шер пăт, „Хĕрлĕ партизан“ колхозри звеновод Клементйев 13,9 га çинче ыраш кашни гектартан 183 пăт пухса илнĕ.

Кăçал вăйлă тырпул туса илнипе колхозниксем чăн та пуйан пурăнакан пулса тăчĕç. Колхозниксем ĕçкунĕ çине çуршар пăт тĕштырă илеççĕ. „Хĕрлĕ Туçа“ колхозра кăçал пухса илнĕ мĕн пур тырра колхозниксене килĕрен валеçсе парас пулсан, кашни кил пуçне 950 пăт тырă тивет. Çак колхозрах Руссов Василий 827 пăт, Чапайев йачĕпе тăракан колхозра Илларионов Василий 940 пăт, „РОКК“ колхозри Кошкин Филипп 950 пăт, Федоров Прокопий 1070 пăт, Волков Федор 1101 пăт тĕштырă илнĕ.

Канашлура ударниксемпе стахановецсем вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешнĕ ĕçри хăйсен опычĕсене каласа пачĕç.

—Епĕр пĕтĕм çĕр лаптăкне суртлă вăрлăхпа, 50 процент бионтизацилесе, 50 процент йаровизацилесе акрăмăр. Çапла вара кашни гектартан „Лютесценс“ тулă 29 центнер, сĕлĕ 24 центнер туса илтĕмĕр,—тет „Комбайн“ колхозăн председателĕ Курицын йулташ. Вăл кăçал татах агротехникăна анлăн пурнăçа кĕртсе пыма пулни çинчен калать. Çавнашкалах „Хĕрлĕ Туçа“ колхозран Остряков, Шмидт йачĕпе тăракан колхозран Куприйанов йулташсем вăйлă тырпулшăн мĕнле кĕрешсе пыни çинчен каласа пачĕç. „Хĕрлĕ Туçа“ колхоз 1938 çулта кирек те мĕнле çанталăк пулсан та, гектартан 150 пăт тĕштырă туса илессишĕн кĕрешĕве тухса, пур колхозсене те социалисăмлă ăмăртва чĕнчĕ.

Çакăнпа пĕрлех, канашлура йалхуçалăх ĕçĕсенче чылай сăтăрла ĕçсем пулса пынине кăтартса пачĕç. Михайлов агроном хăйĕн тăшманла ĕçĕпе колхозсене сийен кÿрес тĕлĕшпе пусуçаврăнăшĕсене пăсса пĕтернĕ, вăлах „Победа“, „Трактор“, „Искра“ тата ытти колхозсене те тĕрлĕрен суртлă мар тулă вăрлăхĕсем акма хушса, суртлă вăрлăхсене суртсăрлантарса пĕтернĕ. „Лютесценс“ суртлă тулă Патăрйел районĕнче кăçал гектартан 20 центнер тухнă, çав хушăрах Михайлов ирĕксĕр актарнă „Цезиум“ тулă гектартан 12 центнер çеç тухнă. Ку тĕслĕхе „Тракторпа“ „Искра“ колхозсенче аванах курма пулать.

Канашлăва пухăннă ударниксемпе стахановецсем 1938 çулта пур колхозсенче те гектартан 125 пăтран кайа мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешĕве тухрĕç. Социалисăмла ăмăртăва Йелчĕк районне чĕнчĕç.

Н. Пушкин.

Пуйан та куљтурлă пурăнаççĕ

ЙЕТĔРНЕ. Ĕлĕк Кăташ йалĕнчи хресченсем хура пÿртсенче пăчăхса пурăннă, вĕреннĕ çынсем пулман.

Халĕ йалти пурнăç йăлтах улшăнчĕ. Колхозниксем пуйан та куљтурлă пурнăç çулĕ çине тăчĕç. Колхозра тăрăшса ĕçлесе çимелĕх те, сутмалăх та тырпул илеççĕ. Акă, велосипед 9 колхозникĕн, самавар—45, çĕвĕ машинĕ 19 колхозникĕн пур. 1938 çулшăн кашни хуçалăхах тĕрлĕрен хаçат-журнал çырăнса илет. Çамрăксем шкулсенче вĕренеççĕ.

Ф. Кољцов.

ПАТĂРЙЕЛ. (Хамăр корр.). „Сормово“ колхоз членĕ Герасим Йермолайев 4 çул хушши конюх пулса ĕçлет. Вăл лашасене аван пăхать. Ĕлĕк Йермолайев йулташ начар пурăннă. Халĕ вăл пуйан та куљтурлă пурăнать. Кăçал вăл хăйĕн ĕçкунĕсемшĕн 450 пăт тĕштырă илет.

— Кăçалхи пек савăнăçлă пурнăç епĕ хамăн ĕмĕрĕмре те курман,—тет Йермолайев йулташ.

Хавасла тĕлпулу

Патăрйел. (Хамăр корр). Аслă Совет депутачĕ Олга Тихоновна Харитонова йулташ çак кунсенче, Аслă Совет сессине кайас умĕн, Нĕркеçри Шмидт йачĕпе тăракан колхозра пулчĕ. Колхозниксем хăйсем палăртса суйланă депутата хаваслăн кĕтсе илчĕç. Харитонова йулташ колхозниксемпе калаçу туса иртерчĕ, çуракине аван хатĕрленме кирли çинчен каласа пачĕ. Колхозниксем унăн сăмахĕсене ала çуспа йышăнчĕç.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешÿ пырать

„Хĕрлĕ Хучаш“ колхоз (Йетĕрне р.) 1938 çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешет. Йалхуçалăх машинĕсене йăлтах йусаса хатĕрленĕ. Акара кÿлмелли хатĕрсене бригадăсем çумне çирĕплетсе панă. Вăрлăхсене трийерпа тасатса, кĕлетсене тирпейлесе хунă.

Уйа тăкмали тислĕксене пĕр çĕре купаласа хураççĕ, вĕсем валљи уйрăм вырăнсем пур. Уйĕç бригадисем уйра йур тытас тĕлĕшпе хĕрсех ĕçлеççĕ.

М. Й-в.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те туман

Вăрнар районĕнчи колхозсенче тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçессипе вăрлăх фончĕсене хывасси кайа йулса пырать.

Районра 85 колхозран 42 колхозра çеç тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеççе панă.

Сăкăт йалсоветне кĕрекен „Хĕрлĕ çăлтăр“, Буденный йачĕпе тăракан колхозсенче пайанхи куна çитсе те аван çапса пĕтермен.

Буденный йачĕпе тăракан колхоз председателĕ партипе правителствă кăтартнă решенисене пурнăçласа пымасть. Пайанхи куна çитсе те натур-платă парса татман, ĕçкунĕсем тăрăх тупăша валеçмен.

Ку колхозсенче çуракине хатĕрленесси те калама çук кайа пулса пырать. Пайанхи куна çитсе нимĕн те туман.

А. Пољаков.

Колхозăн председателĕ çук

Сталинла виççĕмĕш пйатилеткăна кĕтĕмĕр. Виççĕмĕш пйатилеткăн пĕрремĕш çулхи çуракине бољшевикла хатĕрлесе, нихăçан пулман вăйлă тырпул туса илессишĕн пирĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешмелĕ. Вăрлăхсене суртласа, лайăх пăхса усрамала, йалхуçалăх машинисене йусаса, пуçтарса лартмала. Апла пулин те, Вутланти „Бољшевик“ колхозра (Елĕк р.) йертсе пыракан çук. Çавăнпа та çуракине хатĕрленессипе никам та нимĕн те шарламаççĕ.

Малтанхи председатĕле Семенов Леонтине колхоза бољшевикла йертсе пыманшăн вырăнтан кăларнă. Колхозниксен аслă пухуvĕ пĕр сасăпах Елĕк райĕçтăвкомĕнче ĕçлекен Матвейев Захара колхоз председателне суйларĕ. Вăл „Бољшевик“ колхоз членĕ. Вăл колхозниксен аслă пухăвĕнче те пулчĕ.

— Епĕ райĕçтăвкомра укçа нумай илетĕп, колхоз председателне суйласан та унта ĕçлеместĕп,—терĕ вăл. Çавах та колхозниксен аслă пухуvĕ вăл колхозпа йертсе пыма пултарасса шанса, колхоз председателне суйларĕ.

Халĕ колхозсем çитĕс çуракине пĕтĕм вăйа хурса хатĕрленеççĕ пулсан, „Бољшевик“ колхозра çуракине хатĕрленесси çинчен сăмах та хускатакан çук. Матвейев колхоз хуçалăхĕ çинчен нимĕн те шутламасть. Вăл колхозниксем шанса панă ĕçе тытăнмасть. Колхоз председателсĕр тăрса йулчĕ. Кун çинчен районри çĕрĕç пайне тата райĕçтăвкома та пĕлтернĕ. Анчах Матвейева пайанхи куна çитсе те ĕçе тытăнтармаççĕ.

Каменев.

Колхозниксен пурнăçĕ

ЕЛĔК. Актай йалĕ улшăнчĕ. Халĕ ĕнтĕ йалта хура пÿртсем çук, вĕсен вырăнне пысăк та çутă, таса пÿртсем. Кашни хуçалăхах тенĕ пек радио кÿртнĕ, стенасем çумĕнче тĕкĕр, сехет çакăнса тăраççĕ. Колхозниксем ĕçлесе çителĕклĕ тырпул илеççĕ, вылљăх-чĕрлĕх, пыл хурчĕсем усраççĕ. Çамрăксем аслă шкулсенче вĕренеççĕ.

Акă П. Петрович колхозник ĕлĕкхи саманара начар пурăннă, хура пÿртсĕр урăх нимĕн те пулман. Тырри-пулли çиме çитмен, вылљăх-чĕрлĕх усрайман. Колхоза кĕнĕреннпе пуйан та куљтурăлă пурнăçпа пурăнакан пулчĕ. Çĕнĕ пÿрт лартрĕ. Радио кÿртрĕ, стенасем çинче çулпуççен портречĕсем, 3 екземпљар тĕрлĕрен хаçат-журнал çырăнса илет.

Колхоз правлени валљи пысăк та таса çурт лартрĕ. Правленине пырсан унта вăхăта усăлă иртерме хаçат-журнал çителĕклĕ, радио кÿртнĕ. Шашкă-шахмăт, домино пур. Кашни ернерех спектакљ, вечĕр йе кино пулса иртет.

—Спасиба Сталин йулташа, пире çакнашкал ырă та куљтурăлă пурнăç туса панăшăн, теççĕ колхозниксем.

И. Асторов.

Хучаш йалĕ

ЙЕТĔРНЕ. Çирĕм çул хушшинче Хучаш йалĕн сăн-сăпачĕ паллама марах улшăнчĕ. Ĕлĕкхи, чĕлĕм тĕтĕмĕпе тулса ларнă хурал пÿрчĕ вырăнне йал варринче куљтурă çурчĕ—пысăк клуб туса лартнă. Унтах колхоз канцељарийĕ, вулав çурчĕ пур. Вулав çуртĕнче хĕрлĕ кĕтес организациленĕ. Йерçулĕ вăхăтра колхозниксем клуба пырса радио итлеççĕ, хаçат-журнал вулаççĕ.

Клубра час-часах спектакљсемпе вечĕрсем пулаççĕ.

Йалта трахпункт тата пуçламĕшпе туллимар вăтам шкулсем пур.

М. Йемељйанов.

Тăшмансем умĕнче барабан çапса пынă Судаков çинчен

Пайанхи куна пирĕн бољшевикла сыхлăх кирлĕ вырăнта тăрать теме пултараймастпăр-ха епĕр, мĕншĕн тесен тăшмансен йалавне çĕклесе пыракансем, вĕсем умĕнче касăхса кайиччен барабан çапакансем пирĕн хушăмăрта халĕ те пытанса пурăнаççĕ. Пытанса пурăнаççĕ çеç те мар, кăшпĕр организацисен тимсĕрлĕхĕпе усă курса, вĕсем йертсе пыракан организацисенче ĕçлеççĕ, çав политикăла чунсăрлăха пула, вăл çынсем пысăк ĕçсем патнех кармашаççĕ. Апла мар пулсан ПСК(б) Партии Чăваш Обкомĕнче Судаков ĕçленине, ăна Обком йулашки вăхăтра Чăвашиздат управљайушчийĕ туса лартнине йепле ăнланмала тата?

Акăљчан писателĕн Джонатан Свифтăн „Путешествие Гулливера“ йатлă романне нумайĕшĕ пĕлеççĕ. Вăл романра Гулливер çул çÿренĕ чух Лапуту çĕрĕ çине пырса лекет. Вăл çав çĕршывăн королĕ патне кĕрсе тухать. Унти йăласем тăрăх королљ патне ÿпеленсе, урайне çуласа пымала пулнă.

Судаков çак королљ патне пыракан çынсем йевĕрлĕ. Вăл урайне те, Смердйаковсем ларнă сĕтел урине те çуллама хатĕр пулнă. Вăл сутăнчăксем, буржуалă националиссем умĕнче йăпăлтатнă, вĕсен чашăк-тирĕкĕсене çулланă. Ун тавра Т. Д. Алексейев, Коричев С. йышши халăх тăшманĕсем пулнă. Судаков вĕсемпе пĕрле ĕçнĕ, çинĕ. Никитинсем Мускава пырсан, Судаков, чăваш земљачестви председателĕ пулса, йышăнса илнĕ, вĕсен йачĕпе пухусем иртернĕ, вĕсен „сывлăхĕшĕн“ темĕн чухлĕ кăшкăру палли лартнă. Мускавран Шупашкара темĕн чухлĕ саламлă телеграмсем çырнă тата ытти те. Кам пĕлмест пулĕ вăл саламлă телеграмсене. Ун чухнехи „Капаш“ хаçат тата ытти хаçатсем те Судаковăн йăпăлтатулă телеграмĕсене хыпалансах вырăн тупса панă, пичетленĕ, „çулпуççĕсене“ мухтанă.

Мускаври чăваш представителстви çумĕнче буржуалă националиссем пынă май ĕçкĕ-çикĕсем тунă. Земљачествă пухăвне пынисенчен хăш-пĕрисене суйласа илсе ĕçтернĕ, çитернĕ. Кун пек йапала пĕр-ик хут çеç пулман—нумай хут пулнă. Кам укçипе ĕçнĕ вĕсем? Паллах, государствă укçипе. Çав вăхăтрах Мускаври чăваш студенчĕсем пулăшу ыйтма пырсан, земљачествăн укçа „пулман“, вĕсене ахалех „йăпатса“ кăларса йама тăрăшнă.

Çапла пĕр хутчен Мускава А. Н. Никитин пынă май аслă шкулсенчен вĕренсе тухакан чăваш студенчĕсене пухнă. Пухăнтăмăр. Сĕтелсем çинче ерех, сăра. Хăшпĕрисем сăмахсем тухса каларĕç. Вĕреннĕ вăхăтра нихăçан та аса илменнипе вĕренсе тухас умĕн те пулин аса илсе хисеп турĕç. А. Н. Никитин ÿсĕр, аран-аран уткалать. Кĕç сĕтел çине кăларса лартнă çимĕçсене пуçтарса çăрĕç те каллех уйрăм çынсене пĕрерĕн-пĕрерĕн чĕнме тытăнчĕç.

Земљачествă председателĕ пула тăркачах Судаков студентсенчĕн уйăрăлса кайнă, вĕсен пурнăçĕ çинчен пĕлсе тăман, вĕсем умĕнче касăрăлса çÿреме пăхнă. Земљачествă укçи-тенкине кирлĕ пек тыткаламан.

„Сÿпĕлти çын майатник йевĕрлĕ: ăна та, кăна та чармала“, — тет Косма Прутков. Ку питех те тĕрĕс. Буржуалă националиссем умĕнче барабан çапакан Судаков халĕ лăпланнă ĕнтĕ. Халĕ Судаков бољшевикла партин витĕр куçĕ хăйне курасран пиклеисе ларать.

Тăшмансен ирсĕр йăвине çапса çĕмĕрнĕ. Анчах вĕсем умĕнче барабан çапакансем халĕ те пытанса пурăнаççĕ-ха. Судаков çавăн пек пытанса пурăнакансенчен пĕри.

Ст. Минейев.

Маскăна сÿсе илмеле

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Карăк-Çырми йалсовет председателĕ пулса И. А. Ербулаткин ĕçлет. Кам вăл? Унăн ашшĕ Октябĕрти Социалисăмла Аслă револљуци пуличчен темиçешер гектар çаран, акмали çĕр тата вăрман тара илсе, йалти чухăнсен вăйĕпе усă курса пурăннă. Ербулаткин Кăрмăшри кулаксен восстанине хутшăнса, красноармеецсене асаплантарса тискерĕн вĕлерес ирсĕр ĕçре пулнă.

1928 çултан ун çине çирĕп задани хураççĕ. 1931 çулта колхоза кĕрет, кайран колхоз членĕнче тăрса Ербулаткин тăшманла ĕçсем туса колхозран тухать. Колхоза хирĕçле елек сарса хăйне пĕрле темиçе хуçалăха кăларать. 1932 çулта каллех колхоза, унтан хăйĕн çывăх тусĕсем пулăшнипе колхоз председателне хĕсĕнсе кĕрет. Кунта вăл сăтăрла ĕçсем тăвать. Уншăн ăна икĕ çуллăха хупса лартаççĕ. Тĕрмерен таврăнсанах, каллех лаша ґыхине вĕлерет, çакăншăн каллех 6 уйăх хушши ирĕксĕр ĕçлеттермеле тăваççĕ.

Районран килнĕ уполномоченнăй В. Х. Кузьмин 1935 çулта халăх кăмалне пăхăнмасăр ăна йалсовет председателне „суйлаттарса“ хăварать. Йалсовет председателĕ пулса ĕçлеме пуçласанах, Ербулаткин актива салатса йарать, критикăпа самокритикăна пусĕпех пусарса лартать. Хăйĕн ашшĕпе арăмне конюха, ывăлне вулав çурчĕн пуçлăхне вырнаçтарать. Ашшĕ лаша ґыхи урине хуçрĕ, ывăлĕ вулав çурчĕн ĕçĕсене йухăнтарса пĕтерчĕ.

1936 çулта Ербулаткин сĕннипе колхоз председателĕ пулма Н. Кошелева лартаççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те пĕрлешсе сăтăрла ĕçсем тума тытăнаççĕ. Арăтла сысна аçине кăларса йараççĕ. Никама та паллă мар сăлтавпа сысна сасартăк вилет. Колхозри пулăшу кассинчен Ербулаткин 45 пăт тырă илет, Кошелев çав кассăри тырра пасара кайса сутать, йединоличниксене парса салатать. Çур гектар çĕр çине акнă купăстана шăнтса йараççĕ, 3 гектар çинчи кăшмана йур айнех хăвараççĕ. 1937 çул 2000 пăт çĕрулмине вăхăтсăр кăлараççĕ, тирпейсĕр тытса çĕртсе йараççĕ.

Кошелева колхоз председателĕнчен кăларнă, анчах Ербулаткин хăй вырăнчех йулчĕ-ха. Ербулаткин маскине сÿсе илмеле, тăшманла ĕçсем тунăшăн халăх умĕнче ответ тыттармала.

В. Н. Горшков.

П. МОСКАТОВ

ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕн Тĕп Суйлав Комиççин председателĕ

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕ

1938 çулхи йанварĕн 12-мĕшĕнче, Совет Сойузĕн столицинче ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш сессийĕ уçăлчĕ. Тăван çĕршывăн мĕн пур кĕтесĕсенчен Мускава халăх избранникĕсем — Сойуз Совечĕн тата Национаљнăçсен Совечĕн депутачĕсем пухăннă.

Вĕсемшĕн, коммунисемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн, тăхăрвунă пĕр мĕлйун суйлавçă сасăланă. Совет халăхĕ пĕтĕм кăмăлпа хăйĕн сассине хăйĕн чи лайăх ывăл-хĕрĕсемшĕн, социалисăмла тăван çĕршывăн сулăмлă патриочĕсемшĕн тата çĕнĕ, телейлĕ пурнăçăн паттăр та талантлă строителĕсемшĕн пачĕ.

Совет Сойузĕн Аслă Советне депутатсем суйлани совет стройĕн вăйĕне пултарулăхне, пирĕн çĕршывра пурăнакан тĕрлĕ халăхсем Ленин—Сталин партине чикĕсĕр шаннине тата ăна чунтан йуратнине пĕтĕм тĕнчене кăтартса пачĕ. Суйлав кампанийĕ çакăн пек итогĕсем çинчен пĕр буржуалă правителствă та ĕмĕтленме пултараймаст. Коммунисемпе партире тăманнисен блокĕ суйлавра çакăн пек çĕнтерÿ тунипе буржуалă государствăсен, буржуалă парламентарисăмăн суйлав демократийĕ йепле, мĕскĕнĕн тата вăйсăр курăнать!

Пољшăра суйлав прависемпе мĕн пур халăх хисепĕнчен пурĕ те 48,8 процент анчах усă кураççĕ. Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче — 42,8 процент. Францире кунтан та сахал—28,2 процент. Йапонире вара — пурĕ те 21,1 процент. Парламентсен йулашки суйлавĕсенче мĕн пур суйлавçăсенчен çакăн чухлĕ суйлавçă хутшăннă: Йапонире—69,9 процент, Пољшăра—46,6 процент. Урăхла каласан, Йапонире суйлава çĕршывра пурăнакан мĕн пур суйлавçăсенчен çичĕ пайĕнчен пĕр пайĕ анчах хутшăннă. Вунă мĕлйун суйлавçă пĕтĕм Йапони халăхĕшĕн суйланă! Анчах, çак 10 мĕлйун суйлавçăран та правителствă партийĕсемшĕн çичĕ мĕлйун суйлавçă кăна сасăланă. Виçĕ мĕлйун суйлавçă Йапонире правителствăна хирĕç сасăланă. Кунсăр пуçне тата 4 мĕлйун суйлавçă пуçĕпех суйлава тухман. Çапла ĕнтĕ, Йапони правителствишĕн суйлав урнисем патне пыма ирĕк панă суйлавçăсенчен те çурри анчах сасăланă.

Буржуалă парламентарисăмлă ытти çĕршывсенче те суйлав ĕçĕ çакăн йевĕрлех тăрать: Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче 1936 çулта йертсе пыракан партийĕн мĕн пур суйлавçăсенчен 60,5 процент сасăланă. Англире 1935 çулта пулса иртнĕ суйлавсенче йертсе пыракан партийĕн 53,6 процент сасăланă.

* * *

Пирĕн çĕршывра анчах суйлавсем пĕтĕм халăх суйлавĕ пулса тăраççĕ. Ахаљтен мар ĕнтĕ иртнĕ суйлав пĕтĕм халăх праçникĕ пек пулса тăчĕ. ССР Сойузĕн Аслă Советне суйласси пирĕн, Сталинла Конституци тăрăх, пурне те тивĕç, пĕтĕмпех тата тÿрĕх суйламалла правапа вăртăн, мĕнле расăна национаљнăç пулнине, мĕн чухлĕ вĕреннине, мĕнле социалă сийрен тухнине, пурлăхĕ мĕнлине тата ĕлĕк мĕнле ĕçпе пурăннине пăхмасăр панă суйлав правипе пулса иртрĕç.

ССР Сойузĕн Аслă Советне депутатсем суйланă пек ирĕклĕ тата пĕтĕм халăхлă суйлавсене тĕнче халиччен пĕлмен-ха. Пирĕн çĕршывăн кашни гражданинĕ суйлав урни патне пырса Ленин—Сталин партийĕшĕн, совет влаçĕшĕн, тăван çĕршывшăн, социалисăмшăн сасăлассине хăйĕн чыслă тивĕçĕ вырăнне хурса пурнăçлама тăрăшрĕ.

Суйлав урнисем патне пысăк хавасла пырса, Совет Сойуз халăхĕсем хăйсен сассисене пысăк хаваслăхпа коммунисемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн пачĕç: Сойуз Совечĕн депутачĕсемшĕн мĕнпур бÿллетенсенчен 98,6 процент тата Национаљнăçсен Совечĕн депутачĕсемшĕн 97,8 процент панă. Çакăн пек сасăларĕ ĕнтĕ пирĕн совет халăхĕ социалисăм çĕнтерÿвĕшĕн, колхозла стройăн чапĕшĕн. Партин Сталинла Тĕп Комитечĕне совет правителствин пĕтĕм шалти тата тулаш политикишĕн.

Халăх Аслă Совета совет государствин ĕçĕсене туса тăма совет çĕрĕ çинчи чи лайăх çыннисене шанса йачĕ.

Мускавра тата Ленинградра, Тбилисире тата Ашхабадра,— тĕрлĕрен нацилĕ Совет Сойузĕн пĕртан правалă мĕнпур республикисенче коммунисемпе партире тăманнисем тăвалла пĕрлĕхре пулса кандидатсем пулма: Сталин йулташа, унăн чи лайăх соратникĕсене, социалисăмла ĕçĕн йатлă çыннисене—заводсенчи тата колхоз уйхирĕсенчи стахановецсене, Совет Сойузĕн Геройĕсене, Арктикăна çĕнтерекенсене, пирĕн çĕршыва калама çук пысăк чап тунă легендарлă љотчиксене—сталинла соколсене тăратрĕç.

Пуринчен лайăххисене, пуринчен талантлисене, ĕç тата паттăрлăх, наукă тата искусствă çыннисене — çĕршывăн мухтавĕ, тата йуратнă çыннисем пулса тăракансене—Аслă Совета суйланă.

Пĕтĕм халăх хăйĕн пĕрремĕш депутатне Сталин йулташа суйларĕ.

Сталин йулташа Аслă Совета суйламали чыслă тивĕçлĕх Мускав хулинчи Сталинский суйлав округĕн суйлавçисене тиврĕ. Анчах та, суйлав пулса иртнĕ кун пĕтĕм çĕршыв чĕрипе Мускавра, столицăн мăнкăмăллă та телейлĕ гражданĕсем суйлав урнисене халăхсен çулпуçĕ йачĕпе бÿллетенсене йанă суйлав участкисенче пулчĕ.

Халăх Сталин йулташăн чи лайăх соратникĕсемшĕн тата унăн ученикĕсемшĕн те—Сталинла Тĕп Комитет членĕсемшĕн, партипе совет правителствин руководителĕсемшĕн: В. М. Молотов, Л. М. Каганович, К. Йе. Ворошилов, М. И. Калинин, А. А. Андрейев, А. И. Микойан, В. Йа. Чубарь, С. В. Коснор, А. А. Жданов тата Н. И. Йежов йулташсемшĕн те пысăк хаваслăхпа сасăларĕ.

Çак хăйĕн чи лайăх ывăлĕсемшĕн совет халăхĕ пĕтĕм чĕререн сасăларĕ. Совет патриочĕсем Аслă Октябĕрти социалисăмла револљуци çĕнтерÿвĕсене кăкăрпа хÿтĕлеме хатĕр тăракансем, Совет Сойузĕн Аслă Советне хăйсен шанчăклă, социалисăмла строителствăна сталинла йертсе пырас опытпа писĕхнĕ руководителсене пĕр кăмăлтан суйларĕç.

Пирĕн совет халăхĕ сталинла Наркома Николай Иванович Йежов йулташа йепле тăракан йуратса шаннине палăртмала. Йежов йулташ мухтавлă йертсе пынипе совет государствин карателнăй органĕсем тăшмансене, троцкисла-бухаринла бандитсене, шпионсене, диверсантсене пĕтерсе пыраççĕ.

„Халăхсен тата государствăсен ăраскалĕсене хаљ çулпуççем кăна мар, вĕсене пуринчен малтан тата пуринчен ытла ĕççыннисен мĕлйунлă массисем татса пыраççĕ. Рабочисемпе хресченсем, шывсăр-мĕнсĕр заводсемпе фабрикăсем, шахтăсемпе чукунçулсем, колхозсемпе совхозсем пурнăçăн мĕн пур ырлăхĕсене тăвакансем, пĕтĕм тĕнчене тăрантарса тумлантаракансем, —акă камсем пулаççĕ çĕнĕ пурнăçăн чăн-чăн геройĕсемпе творецĕсем“.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ Аслă Совета, сăмахран, Оренбург облаçĕнчи паллă комбайнера Феодор Илларионович Колесов йулташа суйланă. Малта пыракан комбайнерсемпе комбайнеркăсен партипе правителствă руководителĕсемпе пĕрле пулнă канашлувĕн стенограмминче питĕ чаплă епизод çырăнса йулнă. Колесов йулташ трибунă çине хăпарсан, Сталин йулташ ăна:

„Тахçанхи знакомăй, сывă-и?“ тесе саламланă. Ку канашлуччен Колесов Кремљри залра виçĕ хутчен пулнă ĕнтĕ, çавăн пек пысăк хисепе вăл, социалисăмлă çĕрĕсĕн чаплă маçтăрĕ, хăйĕн ĕçĕпе, тăван çĕршывшăн тÿрĕ ĕçленипе илнĕ.

Аслă Советăн депутатне Алексей Стаханов суйланнă. Вăл—совет çĕршывĕн талантлă рабочийĕ, парти ирĕкĕпе унăн рекорчĕ пĕтĕм халăхăн стахановла йухăмĕ пулса тăчĕ.

Аслă Совета пысăк чап илнĕ трактористкă-орденоносец Паша Ковардак та суйланнă. Вăл, нумай пулмасть çырăва пĕлмен кĕтÿçĕ пулнăскер, совет влаçĕ вăхăтĕнче социалисăм çĕршывĕнчи ĕçре паллăрнă чи паллă геройњăсенчен пĕрийĕ пулчĕ.

Стаханов та, Ковардак та, Виноградова та, Марийа Демченко та—рабочисем, хресченсем—халĕ аслă шкулсенче вĕренеççĕ. Вĕсем пирĕн çĕнĕ, совет интеллигенцине илем кÿрекенсем, совет халăх куљтурин ÿсĕм йалавĕ пулчĕç.

Çакăн пек пĕтсе пыраççĕ пирĕн çĕршывра ăс пуçпа тата ал-ура ĕçĕ хушшинчи уйрăмлăхсем.

Уйрăмах пысăк хаваслăхпа совет халăхĕ Совет Сойузĕн Геройĕсемшĕн сасăларĕ. Вăл тăван çĕршыв чапĕшĕн тата тĕнче куљтуришĕн паттăр ĕçлекен Папанин, Ширшов, Кренкељ тата Феодоров йулташсене ашшĕ-амăшĕ пек йуратса Аслă Совета суйларĕ.

Пĕтĕмĕшпех халăхран пулса тăракан Хĕрлĕ çар та пысăк чыслăха тивĕçлĕ пулчĕ. Унăн чи лайăх çыннисене халăх Аслă Совета суйласа хăварчĕ: вĕсем—çапăçусенче чапа тухнă легендарлă маршалсем тата çамрăк боецсем. Пољар љотчикĕсене те Аслă Совета суйланă, вĕсем Совет Сойузĕн Геройĕсем Водопйанов, Молоков, Бабушкин, Шевељов йулташсем. Çурçĕр полюсĕ урлă Йевропăран Америкăна самољотпа вĕçсе сталинла трассă хывнă Совет Сойуз Геройĕсене Чкалов, Байдуков, Громов тата ытти йулташсене те Аслă Совета суйланă.

Пирĕн çĕршыври кашни профессирен, халăх хуçалăхĕн пур отраслĕнчен Тĕп Аслă Совета чи лайăх, чи мухтавлă çынсем суйланнă. Пĕтĕм Совет Сойузĕпе паллă чукунçулçă Кривонос, йатлă колхозницă Шаповалова, йатлă ткачиха Симоженкова, йатлă учитељница Леонова, Комаров, Губкин, Бах, Богомолец академиксем, Бурденко профессор, Совет Сойуз халăх артисĕ Москвин, Шолохов тата Толстой писателсем—акă камсем ĕнтĕ вĕсем халăх избранникĕсем, Аслă Совет членĕсем.

Аслă Совета пултарулă совет çамрăкĕсем те суйланнă: 23 çулхи Карайева — Мелекеçри учитељницă, комсомолкă Таља Феодорова — столицăри метростройевкă, 23 çулхи тракторист Неври Калиљайев, Крымран.

* * *

Аслă Совета суйланнă кашни депутат йачĕ тăван çĕршывăн, çавăн пек тĕлĕнмеле лайăх ывăл-хĕрсем ÿстерсе çитентернĕ совет халăхĕшĕн чĕресене савнăçпа тата мухтавлăхпа тултарать.

Пуринчен ытла нацилĕ республикăсенчи çыннисен ÿсĕмĕ савăнтарать. Хăйсен ĕçĕсемпе, хăйсен паттăрлăхĕпе пĕтĕм халăх шанăçне кĕрсе совет государствин аслă

Комсомол Трак райкомĕн тимсĕрлĕхне пула

Комсомол Трак райкомĕн тимсĕрлĕхне пула, районри пуçламĕш комсомол организацисенче ĕçсем йапăхса кайнă.

Пуçламĕш организацисенче уйрăм комсомолецсемпе комсоргсем тăшманла ĕçсем туса пынă. Уйкас Йунтапари пуçламĕш комсомол организацинче çакăн пек ĕçсем тăтăшах пулса пынă. Хăшпĕр комсомолецсем ĕçке йерсе кайса тăшманла ĕçсем тунă. Йаблочкин комсомолец, уйхир ĕçĕнчи стахановкăсене пусмăрланă, вĕсенчен мăшкăланă. Йаблочкинăн тăшманла ĕçĕсене райкомра ĕçлекенсем лайăх пĕлнĕ. Анчах та унăн тăшманла ĕçĕсене вăхăтра тăрă шыв çине кăларас вырăнне, райкомол секретарĕ Георгийев кашни пухурах: Йаблочкин пек ĕçлемеле, унтан пример илмеле, вăл лайăх ĕçлет,—тесе кăшкăрнă.

Райкомол тимсĕрлĕхĕпе çакăн пек тăшманла ĕçсем Йуçкассинчи, Медикассинчи пуçламĕш организацисенче те пулнă. Медикассинчи пуçламĕш организаци комсорĕ Петров хăй тăшманла ĕç туса пынă. Çакна райкомолри йăвашчулла работниксем сисмĕ пулин те, тăрă шыв çине кăларас вырăнне ăна ыррласа тăшманла ĕç тума пулăшса пынă.

Çакăн пек киревсĕр ĕçсем районри ытти пуçламĕш организацисенче те тăтăшах пулса пынă. Çаксем пурте райкомол пуçламĕш организацисенче ĕçсем мĕнле тăнине пĕлменни синчен калаççĕ. Чылай пуçламĕш организацисенче политикăла вĕренÿ йухăпса кайнă, комсомолецсем хушшинче хăйсен член билечĕсене йачĕшĕн анчах йăтса çÿрекенсем сахалах мар.

Тусай пуçламĕш организацинче комсорга Василйева райкомол йатшăн анчах лартнă темо те пулат. Çак комсорга райкомолри работниксем 2 çул курса каламан. Комсорг хăйсен пуçламĕш организацинчи комсомолецсене те пĕлмест. 4—5-шер уйăх член укçи тÿлеменкомсомолецсем нумай.

Çакăн пекех Çĕн Йĕкĕтри „Ирĕклĕх", Кушарти Буденный йачĕпе тăракан колхозсем çумĕнчи комсомол пуçламĕш организацисен ĕçĕсем те начар. Ку организацисенчи йулхав комсоргсем Кĕучникова Иванов хăйсем киревсĕр ĕçсем туса пынă. Кĕучников колхоз председателĕ пулнă, вăл колхоза йухăнтарма тытăннă.

Ĕçкĕ ăшне путнă Иванов хăй киревсĕр ĕçсем туса пынă. Вăл колхозри стахановкăсемпе стахановецсенчен мăшкăланă. Вĕсене хĕнесе пурăннă.

Çакăн пек киревсĕр ĕç тунисене райкомол пĕлнĕ, анчах вăхăтра пĕтерес тесе тăрăшман. Райкомол çаксенчен пĕрре те урок тума шутламан.

Трак райкомолĕн тимсĕрлĕхне пĕтермеле, районри комсомол организацинчи киревсĕр ĕç тăвакансене, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес, çамрăксене коммунисла воспитани парас ĕçе лайăхлатассишĕн ПСК(б)П Трак райкомĕн те вăйа хурсах ĕçлемеле. Комсомола йертсе пырас ĕçе вăйлатмала.

Н. Петров.

—*○○○*—

Шоферсем хушшинче нимĕнле ĕç те çук

Йанварĕн 9-мĕшĕнче ЧАСС Республикĕнчи госавтоинспекцин ларăвĕнче ĕç вăхăтĕнчех ÿсĕрĕлсе çÿренĕшĕн Çĕмĕрле райĕçтăвкомĕн шофĕрне Малĕкова тата Йустици халăх комиссариачĕн шофĕрне Максимова—шофĕртан кăларчĕç.

Çак пĕр фактах ĕнтĕ шофĕрсем хушшинче массăлă ăнлантарулă ĕçе начар туса пынине питĕ аван кăтартса парат.

Республикĕпе илсен шофĕрсен шучĕ 1000 çынтан та иртет. Анчах мĕнле ĕçлесе пыраççĕ-ха вĕсемпе? Тĕрĕссипе каласан, нимĕн те ĕçлемеççĕ. 1937 çулта шофĕрсен союзĕ тата госавтоинспекци те шофĕрсемпе пĕр хутчен пуху, канашлу та туса иртермен. Квалификацине ÿстерес тĕлĕшпе вĕренмелли кружоксем те ĕçлемеççĕ. Тахçанах шофĕрсем валĕçи Шупашкарта клуб уçасси çинчен калаçаççĕ. Анчах сăмахпа çеç тăваççĕ, ĕçе халĕ те тытăнман.

Автоинспекци шофĕрсен ĕçĕсемпе интересленмест. Учот ĕçне çав тери йапăхтарнă, Госавтоинспекцинче ĕçлекенсенчен: „пĕтĕмпе миçе стахановец?"—тесе ыйтсан, нимĕн те ответлеймеççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем пĕлмеççĕ. Çавăн пекех ударниксем те çук.

Шофĕрсем хушшинче массăлă-ăнлантарулă ĕç çук пирки те ĕнтĕ ирсĕрлĕхсем час-часах пулаççĕ. Ÿсĕр пуçпах машинпа кайса, машинсене çĕмĕрсе пăрахни, ларса çÿрекенсемпе йатлаçни те час-часах пулкалат. Çаксене пĕтерес пулсан, малашне шофĕрсемпе тăрăшсах ĕçлесе пымала.

А. Павлов.

Йамаш йалповĕ çинчен

(Çĕрпÿ районĕ)

Йалпо халĕхи вăхăтра питех те йапăх ĕçлет. Йалпо председателĕ Тихонов суту-илÿ ĕçне йеркелеме тăрăшмасть. Йалпо правлени членĕсем пайщиксемпе çыхăнмаççĕ. Пай укçи пухассине те тивĕçлĕ йеркелемен. Йалпора ĕçлекенсем ĕçкĕ-сикĕпе ытларах интересленеççĕ. Таварсене тĕрĕс сутмаççĕ. Паваркасси лавкине декабĕр уйăхĕнче мануфактурăсемпе калушсем килнĕ пулнă. Продавец Никифоров хăйĕн паллакан çынĕсене черетре тăракан çынсен умĕнчех парса йарать. Хăшĕпĕри тата 3—4 мăшăр калуш, 10—12 метр матери илнисем те пулнă. Ку ĕçе Тихонов пĕлнĕ пулин те, вăл йĕркесĕрлĕхе çийĕнчех пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Таварсем час-часах çитмеççĕ. Тихонов растратчиксемпе кĕрешмест. Растратчиксенчен укçана шыраса илме халăх судне паман.

Андрейев.

—○—

Ертел укçине салатаççĕ

ТРАК. Карайри чăпта çапакан алăсталăх ертелĕн правленийĕнче ирсĕрлĕхсем пулса пыни çинчен хаçатсем çине те çырчĕç, анчах ĕç йусанни курăнмасть. Правлени председателĕн заместителĕнче 1935 çулта Карайри ларйокра ĕçленĕ чух растрата тунă А. Алексейев ĕçлет. Вăл кунта та ертел укçине хăй кĕсйине чикесшĕн çеç тăрăшать. Акă, правлени председателĕ Тиĕяков Й. Шупашкарта курсра вĕреннĕ чух иртнĕ кĕркунне вăл çĕрсе кайнă кураса сутан илсе, ертеле 8.211 тенкĕ сийен кÿчĕ.

Алексейев хăйне хăй мăнна тытать. Колхоз укçине салатнă хыççăн та ответ тыттарман пирки аш кăнма пăрахмасть.

И Петров.

Кийев хулинчи Пионерсен Дворецĕнчи çĕнĕ çул йолки. Йолкăра Украйнăри К(б)П Тĕпкомĕн секретарĕ С. В. Коснор йулташ пулнă.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: С. В. Коснор йулташ Кийев хулинчи отличник пионерсем хушшинче.

(Союзфото).

Оборудованисене йусасси—ответлă ĕç

Предприйатисем умĕнче ĕç тухăçлăхне ÿстерес, продукци пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртессине оборудованисемпе ĕçхатĕрĕсене йаланах йусавлă тытассине организацилени татса парать. Анчах ку тарана çитиччен пур предприйатисенче те йусав ĕçĕ çине тимлĕн пăхман. Çавна пула ку участокăра сăтăрла ĕçсем тăваççи те чылай пулнă. Сăтăрçăсем пур майсемпе те оборудованисене пăсса пĕтĕм завод йе фабрик ĕçне чăрмантарасшăн тăрăшнă.

ПСК(б)П Партин 1937 çулхи февралĕнчи пленумĕ хыççăн рабочисен массисем сăтăрçăсене тăрă шыв çине кăларса çапса аркатса вĕсен тĕпренчĕкĕсене, йулашкисене пĕтерессишĕн кĕрешме çĕкленчĕç. Массăпа тачăн çыхăнса массăн хастарлăхне лайăх организациленĕ çĕрте предприйатисен ĕçĕсем хăвăрттăн çĕкленме тытăнчĕç.

Çав вăхăтрах чылай фабрик-заводсем кайа йулса пыраççĕ. Йулса пынин сăлтавĕсенчен пĕри вăл оборудованисене лайăхăн йусасах тăрассине организацилесе, вĕсемпе туллин усă курма тытăнмашни пулать. Вăрмар районĕнчи крахмал завочĕ декабĕр уйăхĕнче двигател ваннипе пĕр уйăха йахăн ĕçлемесĕр ларнă. Двигател ваннă хыççăн Вăрмарти чăх-чĕп комбинатĕнчен илсе пынă 18 лаша вăйлĕ двигателе те çийĕнчех ватнă. Унта локомотив çĕмĕрĕлнипе простойсем нумай пулаççĕ. Анчах завод дирекцийĕ, партипе профсойуз организацисем йаланах йурăхсăр „тупи—сăтăрçăсен ĕçĕ" пулса тăнине тавçăрса илмеççĕ-ха. Долгополĕнчи хими заводĕнче оборудованисене йусасах пыман, йусав ĕçне лайăххăн йĕркелемен пирки браксемпе простойсем пулаççĕ. Оборудованисемпе усă курасси уйрăмăнах вăрманпромхозĕнче начар пырать.

Оборудованисене йусас ĕçе йĕркелессине амортизаци валĕçи уйăрнă укçа-тенкĕпеле тĕрĕс усă курас йĕрке пулманни те пысăк чăрмав кÿнĕ. Предприйати директорне амортизаци валĕçи уйăрнă укça-тенкĕпе усă курма май паманни йусав ĕçĕнче предприйати руководителĕсен ответлăхне йăвашлатнă, амортизаци валĕçи уйăрнă укçа-тенкĕпеле тĕрĕс усă курассине чăрмантарнă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи йанварĕн 8-мĕшĕнче „амортизаци валĕçи уйăрнă укçа-тенкĕпеле усă курасси тата промышленнăç предприйатийĕсенче йусав ĕçне лайăхлатасси" çинчен йышăннă постановленире йусав ĕçне начар туса пыни государствăна пысăк сийен кÿнине палăртса, ăна лайăхлатма татăклă кăтартусем панă. Пур машинсене, оборудованисене тата сооруженисене тирпейлĕ тытса усрассишĕн хуçалăх руководителĕсем ответлă. Вĕсен пурнăçа кĕртсе пымала та ĕнтĕ промышленнăç предприйатисенчи йусав ĕçне.

Çавăнпа пĕрлех правителствă йусав ĕçне лайăхлатма кирлĕ условисене те туса парать. Амортизаци валĕçи укçа-тенкĕ уйăрас хисепе чылай ÿстернĕ.

Ку постановлени пур Халăх Комиссариачĕсене те амортизаци тата пĕтĕм йусав ĕçне тума укçа-тенкĕ уйăрассине кашни предприйати валĕçи уйрăмăн тума хушать. Ку ĕнтĕ тĕрлĕ оборудованисене йусама вĕсем мĕн таран ĕçленине т. ыт. те шута илмесĕр пĕр нормă тăрăх укçа уйăрса парас тĕлĕшпе пулнă сийенлĕ практикăна пĕтерет. Предприйати директорĕсем амортизаци валĕçи уйăрнă укçа-тенкĕ хисепĕнчен йусав ĕçне тума илмелли укçана тÿрех предприйатисенче хăварма пултараççĕ.

Халĕ пĕтĕм вăйа, тимлĕхе сăтăрçăсен йулашкисене пĕтерессишĕн кĕрешнĕ çĕре хуни кирлĕ. Оборудованисене йусасси—ответлă ĕç. Çакна предприйати руководителĕсен йаланах асра тытмала.

—○—

Чăвашвăрманпромтресчĕ тăрăх 1938 çулхи 1 мĕш квартăлти вăрман хатĕрлев планне тултарнине кăтартакан

СВОДКĂ

Йанварĕн 10-мĕш тĕлнĕ

Вăрманпромхозсемпе механизациленĕ вăрман пункчĕсем	Плана тултарнă проц.: Хатĕрлессипе	Плана тултарнă проц.: турттарассипе
Шупашкар хули	7,4	8,2
Çĕмĕрле	2,8	6,9
Вăрнар	3,9	4,4
Йĕпреç	2,8	4,2
Кирĕ	2,4	2,6
Улатăр	2,3	4,2
Шăмăршă	3,2	7,8
Пĕтĕмпе	3,4	5,2

Чăвашвăрманпромтресчĕ тăрăх 1938 ç. 1-мĕш квартăлти механисăмсемпе вăрман турттарас плана тултарнине кăтартакан

СВОДКĂ

Йанварĕн 10-мĕшĕ тĕлне

Механизациленĕ çулсем	Плана тултарнă процентпа
Кăмашари	4,5
Сăр çивчи	8,0
Çарăкăри	9,0
Канашри	2,2
Чернореченскри	8,4
Кирери	4,1
Атратри	6,1
Соловйовскăри	3,0
Акшкÿĕти	10,3
Шăмăршăри	8,0
Пĕтĕмпе	6,7

Хаçат саракан активист

Тури Туçари (Патăрйел р.) вăтам шкулта вĕренекен Васили Сугутский хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе активлă ĕçлет. Вăл 1938 çулшăн 156 екземплĕар тĕрлĕрен хаçат-журналсем сарнă. Сугутский йулташ хăй „Колхозник йалавĕ", „Пионер сасси", „Клич пионера" тата районри „Октябĕр йалавĕ" хаçата çырăнса илет.

Н. П.

Тата 1200 кубла метр хатĕрлетпĕр

Епĕр хамăрăн бригадăпа нумай çулсем хушши ĕнтĕ Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрманпункĕнче ĕçлетпĕр. Вăрман ĕçне епĕр лайăх вĕренсе çитрĕмĕр. Ĕçленĕ чух ĕç вăхăтне пĕр минут та сайа йамастпăр. Йĕркелĕ, пĕр-пĕрине килĕштерсе ĕçлени çеç ĕç тухăçлăхне хăпартма майсем парать. Епĕр хамăр çине илнĕ обйазателствăсене йаланах пурнăçласа пыратпăр.

1937 çулăн йулашки 4-мĕш квартăлĕнче 3.000 кубла метр вутă тата ытти продукцисене 1000 кубла метр ытла хатĕрлерĕмĕр. 1937 çулхи ĕçĕн итогĕсене пăхса тухнă хыççăн, хамăр çине илнĕ обйазателствăсене ытлашшипех тултарнине палăрчĕ. Ку пире татах та хавхалантарчĕ.

1938 çулта епĕр татах та пысăкрах ÿçĕмсем тăвассишĕн кĕрешÿве тухрăмăр. Çак йанвар уйăхĕнче 1200 кубла метр вутă хатĕрлемеле обйазателствă илетпĕр.

Епĕр хавасланçах ĕçлетпĕр. Пирĕн ĕçлес килет. Анчах Çĕмĕрле вăрманпункчĕ пире кирлĕ пек условисем туса паманни чăрмантарать. Кулĕтмассăлă ĕç начах ÿпçе ларнă. Хаçат-журналсем туйса вулама çук. Рабочисем хушшинче калаçусем те туса иртермеççĕ.

Общежитисемпе баракесенче тасалăх йенчен йĕркелĕ мар. Урайсене вăхăтра çумаççĕ, вĕри шыв çук. Хăшпĕр чухне тата ĕçукçи памасăр тытса тăраççĕ.

Çак çитменлĕхсене епĕр профсойуз организацийĕ пĕтерессе шанатпăр.

Бригадир—Дементйев.

Бригадă членĕсем: Маркелов, Артемйев, А. Дементйев.

—○—

Аслă Советăн пĕрремĕш çеççине ĕçри çитĕнÿсемпе кĕтсе илчĕç

Канаш, Йанварĕн 13-мĕшĕ (Телефон тăрăх). Вагонсем йусакан заводри рабочисем ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш çеççи тĕлне ĕçре çĕнĕ çитĕнусем турĕç. Кузнечнăй цехри рабочисен коллективĕ çеççи уçăлас умĕн кашни кун 8 тоннă боковкă туса кăларма илнĕ обйазателствăна ытлашшипех пурнăçларĕ. Цех йанварĕн 10-мĕшĕнче 14 тоннă боковкă, 11-мĕшĕнче—9 тоннă туса кăларчĕ. Уйрăмăнах йанварĕн 10 мĕшĕнче Кукĕайĕв йулташ 55 штук крйуки туса, плана—458 процент, Миронов—500 процент ытла тултарчĕç.

Инструменталĕнай цехри Кротов комсомолец йанварĕн 10-мĕшĕнче пĕр кунхи нормăна 900 процент, слесăрсем: Никитинпа Иванов йулташсем—300 шер процент, сборщиксен бригади (бригадирĕ Изгорнейев)—452 процент тултарчĕç.

—●—

Вера Касйанова тата тепĕр рекорд турĕ

Çĕмĕрле, Йанварĕн 13-мĕшĕ (Телефон тăрăх). Комбинатри столĕарвăй цехра циркулĕнай пăчкăлă станокпа ĕçлекен Вера Касйанова йанварĕн 11-мĕшĕнче тата тепĕр рекордлă çĕнтерÿ турĕ. Вăл пукан, сĕтел, шкаф пайĕсене туса, сменăри нормăна 480 процент тултарчĕ.

Çапла вара Касйанова, декабĕрĕн 23-мĕшĕнче нормăна 418 процент тултарса, хăй тунă рекордран иртерсе, çĕнĕ çĕнтерÿ турĕ.

Димитрийев.

—○—

Çĕнтерÿсене çирĕплететпĕр

ÇĔМĔРЛЕ. „Болĕшевик" завод кăçалхи çула ĕçре пысăк çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илчĕ. Вăл, 1937 çулхи плана: пĕтĕм продукци туса кăларассипе—114,5 процент, тоннида туса кăларассипе—110,2 процент тултарчĕ. Ку ĕнтĕ 1936 çулхипе танлаштарсан, хатĕр тавар туса кăларассипе 110,8 процент ÿснине пĕлтерет.

Тавар пахалăхĕ те иртнĕ çулхисенчен лайăхланнă. Ĕç тухăçлăхĕ 1936 çулхинчен 109,9 процент, планпа пăхнинчен 112,3 процент ÿснĕ.

Çак çитĕнÿ заводра стахановла йухăма куллен-кун сарса пынипе пулнă. Стахановецсен йышĕ ÿсрĕ. Халĕхи вăхăтра завочĕпе стахановецсем 234 çын, ударниксем 201 çын шутланаççĕ. Вĕсенчен 280 çын хăйсен квалификацисене татах та хăпартас тесе тĕрлĕрен техминимум кружокĕсенче вĕренеççĕ, 57 çынна стахановецсен шкулне йавăçтарнă.

Завод коллективĕ ку таринччен Майкопри екстракт тăвакан заводпа ăмăртса ĕçленĕ. Кăçал та çав заводпах ăмăртăва тухрĕ. Рабочисем 1938 çулта стахановла йухăма татах та анлăн сарса йарса, ăмăртура мала тухма обйазателствăсем илчĕç. Ăна пурнăçлама заводăн пур условисем те пур.

Заводăн хăйĕн клуб пур. Унта калаçакан кино, спектаклĕ кăтартаççĕ. Фабрик-завод комитечĕ стахановецсемпе ударниксене валĕçи клуба çÿреме йатарлăх укçа уйăрнă. Рабочисем валĕçи каток уçрĕç.

Халĕ рабочисем хĕрÿллĕн ĕçлесе пыраççĕ. Кашни рабочи, бригадă пĕр-пĕрипе социалисăмла ăмăртса ĕçлет.

Иванницкий.

Фабрик-завод шкулĕнчен вĕренсе тухсан

Иван Алексейевич Алексейев 1914 çулта, Вăрмар районĕнчи Урнар йалĕнче çуралнă. 1931 çулта йалти шкултан вĕренсе тухсан, вăл Улатăрти транспорт комбиначĕ çумĕнчи фабрик-завод шкулне кĕрет.

Токар пулас пулсан, малтан слесăр ĕçне вĕренмеле. Алексейев та малтан слесăр ĕçне вĕренет. Кайярахпа ăна токăре куçараççĕ.

Тăваттăмĕш çул ĕнтĕ Алексейев йулташ комбинатра токарнăй станокра ĕçлет. Çак тăватă çул хушшинче вăл йаланах ÿссе пычĕ. Техникăна пĕтĕмпех ăша çавăрса илчĕ. Брак кăларассине пачах пĕтерчĕ. Рабочисемпе аван калаçать, кашнинех хисеплет. Унăн лайăх примерĕпе ытти рабочисем те паллашса ĕçлеççĕ. Станока йаланах таса та тирпейлĕ тытать. Ĕç пĕтнĕ хыççăн, йаланах хăйĕн станокне çăвать, тасатать.

Алексейев 1931 çултанпа комсомол ретĕнче тăрать. Комсомол организацийĕ ĕе профсойузпа парти организацийĕсем хушнă ĕçсене активлăн пурнăçлать. Ĕç хыççăн техникума 3-ш курса вĕренме çÿрет.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйланă чухне Алексейев йулташ хăйĕн ĕç нормине 400 процент таран тултарса ĕçлерĕ. Тунă çитĕнĕвĕ чакармасть. Халĕ вăл, тунă çитĕнÿсене çирĕплетсе, тата лайăхрах ĕçлессишĕн мĕн пур вăйа хурса ĕçлет.

Ант. Иванов.

Ачасен спартакиади

ШĂХАСАН. Йанварĕн 10-мĕшĕнче комсомол райкомĕ районри вăтам тата туллимар вăтам шкулсенче вĕренекен ачасен районри спартакиадине туса иртерчĕ. Спартакиадăна 30 ача хутшăнчĕ.

Йĕлтĕрпе йарăнас тĕлĕшпе ăмăртура Шăхасанти вăтам шкулта вĕренекенсем мала тухрĕç. 10 километр хушшине Чумаков (10 мĕш клас) 58 минутра, Орлов (9-мĕш клас) 58 минут та 23 секундра упса тухрĕç. 3 пе 5 километр хушшине те Шăхасанти вăтам шкулта вĕренекенсемех пĕрремĕш вырăн йышăнчĕç.

Ачасем ытти вăйăсем те туса иртерчĕç. Спартакиадă йачĕпе соцкулĕтурă çуртĕнче вечер пулчĕ. Вечĕрта Аваспурт Кибеçри вăтам шкулта вĕренекенсен хорĕ 12 йура йурласа пачĕ.

Хора Кузнецов йулташ йертсе пырать. Çакна каламалла пулать, Кузнецов йулташ шкулта ачасен хорне икĕ уйăха йахăн кăна йертсе пырат пулсан та, ачасем лайăх йурларĕç.

Л. Ш.

органне суйлама тивĕçлĕ пулнă националкă-хĕрарăмсен ÿсĕмĕ икĕ хут ытла савăнтарулă. Узбечкăсем—Аскарова, Артыкова, Махмÿдова, Исламова, Грузи халăхĕн хĕрĕсем—Ната Садагашвили, Етери Мазанашвили, пĕтĕм нацилĕ республикăсен чи лайăх ывăл-хĕрĕсем пулса пирĕн тĕрлĕрен нацилĕ государствăн Аслă советне суйланчĕç.

Пирĕн çĕршывра халăхсен туслăхĕ тата пĕрне пĕри шанасси ÿссех пырать. Совет Сойуз Геройĕ Байдуков йулташ сăрттулă Дагестанра митингра ун синчен лайăх кăтартса каларĕ:

„Йулташсем, есĕр мана Националĕнăçсен Советне кандидата тăратса питĕ пысăк хисеп турăр. Совет çĕршывĕнче анчах ĕлĕкхи саманара пусмăр айĕнче пурăннă националĕнăçсем вырăс çыннине, çар ĕотчикне çакăн пек суйлама пултараççĕ. Мана шаннăшăн тавтăвăтăп, Есĕр шаннине пурнăçа кĕртме епĕ мĕн пур вăйа хурăп. Епĕ сиртĕн пĕрре анчах ыйтатăп: малашне те мана хăвăрăн туслăхран, хăвăрăн критикăран, хăвăрăн халăх ăслăхĕнчен сума хывма ан пăрахăр. Сывă пултăр халăхсен туслăхĕ!"

***

Совет стройĕн сăнĕ çакăн пек. Çакăн пек ĕнтĕ Аслă Совет депутачĕсен сăнĕ. Совет государствин аслă органĕн составĕ çакăн пек.

Çутă кун тĕттĕм каçран мĕнле уйрăм тăрать, вăл та кирек йĕнле буржуалă парламентран та çавăн пекех уйрăм тăрать. Çак уйрăмлăха акă мĕнпе кăтартса пама пулать. Полĕшари сеймра 205 членран 70 помещик. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи представителсен палатинче 244 йурист, вĕсем пурте—трестсен, банксен, концернсен представителĕсем. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен конгрес (парламент) составĕнче ытларахĕш пайĕ финанс капиталĕн приказчикĕсенчен тăрать. Англире парламентăн общинăсен палатинче 27 помещик, 139 рантйе (капиталран илекен процентпа пурăнакан паразитсем), 37 капиталис, 114 банкир тата финансис, çаксемсĕр пуçне тата буржуази агенчĕсем—пупсем, чиновниксем буржуалă литераторсем т. ыт.—пурĕ 166 çын.

Патша Российĕнче 1-мĕш государствă думинче 448 депутат пулнă. Вĕсенчен 114 помещик тата 14 пуп пулнă, III-мĕш государствă думинче вара—167 помещик тата 45 пуп пулнă. IV-мĕш государствă думинче Курск кĕпернинчен çакăн пек çынсем пулнă: Марков II-мĕш, дворйанин, помещик, черносотенцăсене пĕтĕçтерсе тăнă „Вырăс халăх сойузĕн" чи йунлисенчĕн, тискеррисенчен пĕри; Пуришкевич—дворйанин, помещик, „Михаил архангел сойузĕнчи" погромщиксен лидерĕ; икĕ пуп тата 5 помещик.

А халĕ Курск облаçĕнчен Совет Сойузĕн Аслă Советне камсем суйланнă? Халăхăн чăн-чăн ывăл-хĕрĕсем. Вĕсем хушшинче: Дадыкина—колхозница, звено пуçлăхĕ, орденоносец; Белавин—агроном, орденоносец, чухăн хресчен ывăлĕ; Лихачов—Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автозавод директорĕ, орденоносец, рабочи-печатник ывăлĕ; Сериков—колхоз председателĕ, орденоносец; Литвиненко—инженер, орденоносец, батрак ывăлĕ; Коновалов—ПСК(б)П райком секретарĕ, чухăн хресчен ывăлĕ; Салова—райĕçтăвком председателĕ, хресчен хĕрĕ, работница; Масленникова—Курск хула совечĕн председателĕ, работница, сапожник хĕрĕ тата ыт. те.

Çакăн пек чăн-чăн халăх правителстви йертсе пыракан халăха, малти вырăнта Ленин—Сталин партийĕ тăракан халăха, çĕнтерме çук.

Халăх шанăçне тивĕçлĕ пуласси вăл питĕ пысăк чыс тата питĕ пысăк хисеп. Пирĕн аслă халăх шанăçне хаклама пĕлес пулать. Пирĕн депутатсене—халăхăн тарçисене—тĕнчери социалисăмла державăн государствă деятелĕсен питĕ пысăк моралĕ тата политкăла сÿллĕхне хăпартнă. Ку хисепе çĕнĕ, лайăх ĕçсемпе, социалисăма чĕререн шаннипе, партипе тăван çĕршыв ĕçĕшĕн чĕререн тăнипе таврмала.

Мускав хулинчи Сталинский суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухувĕнче Сталин йулташ халăх представителĕн сăнне кăтартса пачĕ. Сталин йулташ каларĕ:

„Суйлавçăсен, халăхăн хăйсен депутачĕсенчен çакна ыйтмала: депутатсем хăйсен задачисен çÿллĕшĕнче тăччăр, вĕсем хăйсен ĕçĕнче политикăлла обывателсен картне анса ан ларччăр, вĕсем Ленин сăнарлă политикăлла деятелсен вырăнĕнче тăччăр, вĕсем Ленин пекех йар уçă та паллă деятелсем пулччăр, вĕсем Ленин пекех кĕрешÿре нимĕскертен хăраман тата халăх тăшманĕсене нимĕн хĕрхенмен çынсем пулччăр, вĕсем ĕç йăвăрланма пуçласан, тавракурăмра мĕнле те пулин хăрушлăх палăрса тухма пуçласан кирек мĕнле хăраса ÿкесрен те, кирек мĕнле хăраса ÿкес пеккинчен те Ленин пекех ирĕклĕ пулччăр, кăткăс ыйтусене татса панă çĕрте, пур йенлĕ ориентаци тата пĕтĕм плюссемпе минуссене пур йенчен те учота илни кирлĕ пулакан çĕрте вĕсем Ленин пекех ăслă та васкамасăр тăвакансем пулччăр, вĕсем Ленин пекех тĕрĕс те тÿрĕ кăмăллă пулччăр, вĕсем хăйсен халăхне Ленин ăна мĕнле йуратнă пекех йуратччăр".

Кремĕлĕн Пысăк двореца Аслă Совет депутачĕсем пуçтăрăнчĕç. Вĕсем хушшинче мĕн пур халăхсенчен суйланă пирĕн пĕрремĕш депутат, халăхăн ăсĕ тата чĕри, социалисăм йалавĕ пулса тăракан Сталин йулташ пулать. Халăхăн избранникĕсем Сталин йулташран государствăна йертсе пырас ăсталăха вĕренĕç.

ЫЙТУСЕМПЕ ОТВЕТСЕМ

Ыйту: Металлсене хĕртсе пысăк температурăлă тусан, вĕсем пăс пулаççĕ-и, çук-и?

Колцов, Йетĕрне районĕ, Кудаш йалĕ.

Ответ: Тĕнчере пур йапаласем те хытă, шĕвĕ тата газ йевĕрлĕ пулма пултараççĕ. Металлсене çителĕклĕ ăшăтсан, вĕсем шĕвĕ пулаççĕ. Пур металлсене те рударан уйăрса кăларнă чухне шăрататççĕ. Тутăхман металлсене: ылттăна, кĕмĕле, платинăна тата ыттисене урăх йапаласенчен шăратмасăр уйăрса илме пулать. Анчах вĕсене те хăш чухне шăратмала пулать. Шăратнă металла татах ăшăтсан, вăл вĕреме тытăнать, вĕренĕ чухне хăвăртах пăс пулать. Çапла металлсем çителĕклĕ хĕртсен, пăс пулма пултараççĕ.

Ыйту: Вулкансем мĕнле пулаççĕ?

Колцов, Йетĕрне районĕ, Кудаш й.

Ответ: Çĕр шарĕн варринче температурă темиçе пин градуса çитет. Çак ăшă вырăна çĕр çийĕ çурĕкĕсем тăрăх темĕн чухлĕ шыв лекет. Çак шыв çĕр варринчи ăшăпа пăс пулать. Çак пăс çĕр çурăкĕсенчен пĕрмай çӳлеле тухса тăрать. Çакăн пек вырăнсене вулкансем теççĕ. Хăш чухне çĕр айĕнче шыв пăсĕ питĕ нумай пуханнă пирки, вăл хăйĕн шăтăкĕнчен тухса пĕтейместь. Вара шыв пăсĕ темĕн чухлĕ пысăк чулсене, вĕри шыва, тата лава текен йапала пĕрĕхтерсе йе йухтарса кăларать. Çакна вара вулкансен извержанийĕ теççĕ. Вулкан извержени умĕн те, извержени вăхăтĕнче те таврари вырăнсенче çĕр чĕтрет.

Пирĕн Сойузра вулкансем Камчатка çурутравĕ çинче тĕлпулаççĕ. Вулкансем Аслă океан хĕрринче, унăн утравĕсенче питĕ нумай.

Ф. Кузьмин.

Чаплă та паха фильм

Йанварĕн 12-мĕшĕнче Шупашкарти кинотеатрта „И. В. Сталин йулташ Мускаври Сталинский суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи пухура 1937 çулхи декабĕрĕн 11-мĕшĕнче Пысăк театрта каланă сăмах" йатлă саслă документла фильм кăтартрĕç.

Кино курма пынă халăх çак чаплă та паха фильма калама çук пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕ. Мускаври Пысăк театра пуçтараннă суйлавçăсемпе пĕрлех, кино курма пынă çынсем те халăхсен йуратнă аслă çулпуçне Сталин йулташа тăвăллăн алă çупса саламларĕç.

С. К.

Пулни-иртнисем

Ыва́лне краççын сапса сунтарнă. Йуçкасси йалĕнчи (Трак р-нĕ) Дмитрий Фадейăвăн арăмĕ 1930 çулта вилнĕ. Арăмĕнчен унăн 5 çулхи Дмитрий йатлă ачи йулнă. Арăмĕ вилнĕ хыççăнах вăл 1930 çулта иккĕмĕш хут авланнă—йалтанах Марфа Варламовăна качча илнĕ. Иккĕмĕш арăмĕпе Дмитрий Фадейев нумайах та пурăнаймасть, ăнсăртран чирлесе вилет. Вара çамрăк Дмитрий ашшĕ-амăшĕсĕр тăлăха йулса, ама çури амăшĕн аллине кĕрсе ӳкет. Унтан Марфă Варламовă хăйсен йалĕнченех Константин Петров йатлă çынна киле кӳртет, Варламовăпа Петров та çамрăк Дмитрине хĕсĕрлесе хĕнесе усраççĕ, ăна тĕрлĕ майпа вĕлерме тăраççĕ.

К. Петров хĕтĕртнипе, кăçал йанварĕн 5-мĕшĕнче каçхине 10 сехетре Варламовă çак çамрăк тăлăх ачана çывăрнă çĕртех краççын сапса çунтарса вĕлернĕ.

Çак тискер ĕç тăвакан М. Варламовăпа К. Петрова тытса арĕслене. Ĕçе тĕрĕслеççĕ.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

„Росснабфильм" трестăн Чăваш республикинчи кантурĕ

Кино-театрсен екранĕсем çинче кăтартма саслă, документлă, çĕнĕ фильм кăларнă:

„Речь товарища И. В. СТАЛИНА на предвыборном собрании Сталинского избирательного округа г. Москвы 11 декабря 1937 г. в Большом театре"

Вырăнсенчи кино-театрсенче хăçан кăтартассине хаçатсем çинче тата радио тăрăх пĕлтернине асăрхăр!

Росснабфильм трестĕн Чăваш кантурĕ.

Академи театрĕнче

Йанварĕн 14-мĕшĕнче Чăвашла спектакль

А. Н. ОСТРОВСКИЙ

„БЕДНОСТЬ НЕ ПОРОК"

(3 пайлă комеди)

Аслă режиссор К. И. ИВАНОВ лартать.

П. Т. Медиков куçарнă. Художник Н. Ф. Байаков. Музыкăна И. Г. Кузьмин формăланă.

Талон № 81. Абонемент № 3, Талон № 9.

Чăвашавтогужтреста

Бухгалтер-ревизор
Аслă бухгалтерсем
Бухгалтерсем
Плановик-економист
тата
запас пайсене тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен
Ответлă исполнител
КИРЛĔ

2—2

Шупашкарти больницăна аслă повар кирлĕ.

Шупашкар хулинчи граждăнсене — пĕлсе тăма —

„Сойуззаготкожăн" Селивановăри (Садвинтрест çывăхĕнче) выльăх пусмали площадки кашни кунах выльăхсем пусса пама йышăнать

Пусса панăшăн çакăн чухлĕ илеççĕ:

Майракалă шултра выльăхран — 2 т. 50 пус.
Вак выльăхран. . . 0 т. 75 пус.
Сыснаран . . . . . 1 тенкĕ.

Çавнашкалах чĕрĕ тирсемпе пуснă чух тухакан йапаласене выльăх пусакан КРУПИНА парса хăварнисен кăçалхи февралĕн 1-мĕшĕнчен пырса расчот тумала.

Вăл срок иртсен претензисене йышăнмаççĕ.

„Сойуззаготкож".

Вăрманпродторгăн Шупашкарти кантурĕ (Малтан ОРС пулнă)

Руководствăна çĕнетнĕ май пур организацисене, уйрăм çынсене (Малтан ĕçленĕ рабочисемпе служащисене) Шупашкарти Вăрманпродторгран укçа-тенкĕ илес пирки претензисем пур пулсан, претензисене 1938 çулхи йанварĕн 15-мĕшĕччен тăратма ыйтать.

Йанварĕн 15-мĕшĕ иртсен претензисене йышăнмаççĕ.

ДИРЕКЦИ.

3—3

Витаминоль

ВИТАМИН „Д"

„Я ПРИНИМАЛ „ВИТАМИНОЛЬ"

Лучшее средство против РАХИТА

„Д" ВИТАМИН препарачĕн кашни çерине ССРС сывлăха сыхлав халăх Комиссариачĕн витамин станцине биологиле тĕрĕслӳ витĕр кăлараççĕ.

Чăвашаптекоуправлачин „Сангигиена" магазинĕсемпе аптекĕсенче пуринче те „Д" ВИТАМИН ыйтăр.

ВИТАМИН Д ДОЗА 5-15 КАПЕЛЬ

Пур колхозсене те пĕлсе тăма

Клевер вăррине планран ытлашши Государствăна панăшăн преми памали срока правителствă 1938 ç. февралĕн 1-мĕшĕчен тăснă. Клевер вăррине планран ытлашши панă колхозсен вăрлăх фончĕсене хывса пĕтерни çинчен справкăсем тăратса февралĕн 1-мĕшĕнчен премисем илмеле.

Йĕтĕн хатĕрлев кантурĕ.
Госсортфонд.

2—1

Чăвашполиграфтреста ОПЫТЛĂ ЕКОНОМИСТСЕМ ТАТА БУХГАЛТЕР-РЕВИЗОР КИРЛĔ.

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

Адрес: Шупашкар хули, Пичет çурчĕ, тăваттăмĕш хутлăх, 35-мĕш пӳлĕм.

3—3

ССР Сойузĕн Финанс халăх комиссарĕ В. Йа. ЧУБАРЬ йулташ çирĕплетнĕ

Ĕççыннисен пурнăçне хăйсен ирĕкĕпе коллективлăн страхламали ПРАВИЛĂСЕМ

1938 çулти йанварĕн 4-мĕшĕ. 6-мĕш №

Пирĕн аслă тăван çĕршывăн ĕççыннисен чи пысăк çĕнтерĕвĕсенчен пĕри ĕççыннисен тата вĕсен семйисен материаллă пурнăçĕ лайăхланса ӳссе пыни пулса тăрать. Çак çĕнтерӳве Сталинла Конституци çине çырса хунă:

„ССР Сойузĕн граждăнĕсен ватăлсан, çавăн пекех тата чирлесен йе ĕçлейми пулсан пурăнмашкăн пулăшу илмели права пур.

Ку права—рабочисемпе служащисене государствă шучĕпе сарлакан социаллă страховани тунипе, ĕççыннисене тӳлевсĕр медицинăлă пулăшу панипе, ĕççыннисене усă курмашкăн курортсем нумай панипе пурнăçа кĕрсе пырать" (ССРС Конституцин 120 статйи).

ССРС ĕççыннисен материаллă пурнăçĕпе йалине малашне те ӳстерсе пырас тĕлĕшпе партипе правителствă туса пыракан нумай ĕçсем хушшинче пурнăçа харпăрхăй ирĕкĕпе коллективлăн страхласси питĕ те пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Айалта кăтартнă правилăсем тăрăх пурнăçа коллективлăн страхлани ĕççыннисене тата вĕсен çемйисене ĕçлеме пултарайми пулса йулнă вăхăта валли йе вилес-мĕн пулсан пĕр вăхăтлăх материаллă пулăшу илес тĕлĕшпе тунă социаллă страховани сумне хушса тунă ĕç пулса тăрать.

ПУРНĂÇА СТРАХЛАМАЛИ УСЛОВИСЕМ

§ 1. Пурнăçа харпăрхăй ирĕкĕпе коллективлăн страхлассипе—врачсем пăхмасăрах тата миçе çултине шута илмесĕр,—рабочисем, служащисем, колхозниксем, кооперацинче тăракан, кустарсем, ФЗУ шкулĕнче, рабфаксенче, техникумсенче тата аслă шкулсенче вĕренекенсем, Хĕрлĕ Çарăн, Хĕрлĕ флотăн тата Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн чаçĕсемпе учрежденисенчи вăтам, аслă тата чи аслă составри çар служащисем, çавăн пекех тата срукран иртерсе пурăнакан кĕçĕн командирсемпе ирĕклĕн кĕрĕшсе ĕçлекен состав та страхланма пултараççĕ.

§ 2. Кашни ĕççынни хăйне кăна хăй ĕçленĕ вырăнта страхлама пултарать.

§ 3. Страхлани тăрăх хăйсен чи малтанхи хут авансра памали взносне тӳленĕ чух чирленĕ пирки отпуска кайман пулсан, фабриксенче, заводсенче, совхозсенче, учрежденисенче, МТС-сенче, ертелсенче тата ытти организацисенче ĕçлекен çынсене пурне те пурнăçа харпăрхăй ирĕкĕпе коллективлăн страхлама илеççĕ.

Колхозсенче харпăрхăй йăйĕпе ĕçлесе страхланас умĕнхи çулталăкра колхозниксем илекен ĕçкунĕсен вăтам хисепĕнчен 20 процентне илнĕ пур ĕçлеме пултаракан колхозниксем те, вĕсем хăйсен пĕрремĕш взносне (авансра) тӳленĕ кун чирлемеççĕ йе инвалид пулнă пирки вĕсене ĕçрен хăтарман пулсан, страхланма пултараççĕ.

§ 4. Страхлас ĕçе йе пĕтĕм предприйатире, учрежденире, совхозра, МТС-че, ертелре, колхозра пĕрле йĕркелеççĕ, йе цехсем, сменăсем, управленисем, отделсем, колхозрипе производствăри бригадăсем йе тата урăх производствăлă звеносем тăрăх йĕркелеççĕ. Пĕр коллективрах унта ĕçлекен çынсен профессийĕсем тăрăх та страхланмали темиçе коллективсем организацилеме пулать, сăмахран, больницăсенче—врачсен, медсестрасен, ытти работниксен коллективĕсем; шкулсенче—преподавателсен, вĕренекенсен коллективĕсем т. ыт те.

§ 5. Коллективлăн страхлама кашни уйрăм çын пуçне 500, 1000, 2000, 3000, 4000 тата 5000 тенкĕлĕх хисепне илеççĕ.

Страхлассине коллективра пурте пĕр хаклăн страхланма пулса хăйсен кăмăлне çыру çырса пĕлтереççĕ пулсан тата ĕçлекенсен составĕнчен 40 проценчĕ хăйсен пĕрремĕш авансра памали взносне тӳленĕ пулсан туса йĕркелеççĕ. Коллектив йышăннă пĕр-пек страхланмали хакпа страхланма шутламан çак коллективри ытти ĕççыннисем, вĕсен хисепĕ мĕн чухлине пăхмасăр, çав коллективрах хăйсен пурнăçне хăйсене кирлĕ пек сахалтарах хакпа страхлама пултараççĕ.

Асăрхаттарни: Коллективра 6 çынран сахалтарах ĕçлеççĕ пулсан, унта вара вăл коллективăн пур работникĕсем те страхланас ĕçе хутшăнни тата пур работниксем те пĕр хаклăн страхланни кирлĕ. Коллективсенче 6 çынтан пуçласа 12 çына çити ĕçлекен пулсан, страхлас ĕçе йĕркелемеле унта 5 çынран кайа мар пĕр хаклăн страхланни кирлĕ.

§ 6. Коллектив страхланнине Госстрах пĕр çулталăклăха йышăнать.

Çав çулталăк хушшинче страхланнисен хисепĕ чакни страхлани çинчен йышăннă договора пăсмасть.

Çулталăклăх срок иртсен страхланнисем хăйсен страхованине тепĕр çула тăсса хăварма пултараççĕ, вара вĕсен тăсса хăварнă страховани тăрăх пĕрремĕш взноса страховани тума кирлĕ çынсен хисепĕ тӳленĕ чухлех тӳлемеле пулать.

§ 7. Страхланнисен коллективĕ хăйĕн малтан йышăннă страховани хакне улăштарма пултарать. Коллектив страхланмали пысăкрах хак çине куçнине çĕнĕрен страхланма тунă условисене пурне те пăхăнса йĕркелеççĕ.

Ĕççынни хăйĕн пурнăçне коллективпа пĕр хаклăн страхланă пулсан тата коллектив страхланмали пысăкрах хак çине куçнă вăхăтра вăл чирленĕ пирки отпуск илнĕ пулсан, ӳн пек чухне вăл, чирленĕ пулсан та, коллектив йышăннă пысăкрах страхланмали хак çине куçма пултарать.

Пĕчĕкрех страхланмали хакпа страхланнă уйрăм çынсем коллектив йышăннă страхланмали хакăн хисепĕ чухлĕ хăйсен страхланмали хакне ӳстерме, ӳстернĕ хак тăрăх тӳлекен хăйсен пĕрремĕш взносне (аванс) тӳленĕ кун страхланнă коллективра ĕçлеççĕ пулсан тата чирленĕ пирки отпуск илмен пулсан кăна, пултараççĕ.

СТРАХЛАНИНЕ МАЙЛАШТАРМАЛИ ТАТА ВЗНОССЕНЕ ТӲЛЕМЕЛИ ЙĔРКЕСЕМ

§ 8. Страхланас текенсен кашниннех вĕсем хăйсен пурнăçне мĕн чухлĕ хакпа страхланма шутлани тата вăл, хăй вилес-мĕн пулсан, страховкă укçине илме кама хушни çинчен çыру çырса кăтартмала.

Страховкă укçине илме страхланнă çын кирек кама та йе темиçе çынна та хушма пултарать. Страхланнă çын хăйĕн страховкă укçине илме хушнă çынна тепĕр çынпа улăштарма пултарать, ун çинчен государствă кредитне тата перекет ĕçне пулăшакан комиссине (комсода) хут çине çырнă зайавлени парать.

§ 9. Страхланма кăмăл панă кашни çын комсод сборщикне страхланнăшăн квартăлта тӳлемели взносран кайа мар аванс тӳлет тата взноса тӳленĕ числана кăтартса çырнă списăк çине алă пусать.

§ 10. Страховкă взносне кашни страхланнă çын çулталăкшăн, çурçулшăн, йе çулталăк чĕрĕкĕшĕн (квартăлшăн) страховкă хакĕн кашни пин тенкинчен 12 тенкĕшер хисепне малтан тӳлесе хурать. Взноссене Госстрах коллектива страховкă свидетелстви панă срокран кайа йулмасăр малтан илет.

§ 11. Страхлас ĕçе туса иртернĕ вăхăтра страхланмасăр йулнă ĕççыннисем çыру çырса зайавлени парса тата страхланмали сӳлте кăтартнă условисене пăхăнса страхланнисен шутне кайран та хушăнса кĕме пултараççĕ.

Вĕсене пĕтĕм коллектив страхланнă çулталăклăх срок пĕтеччен страхланма йышăнаççĕ.

Хутшăнса страхланакан çынсем авансра тӳлемели взноса хăйсем страхланнă кунран пуçласа пĕтĕм коллектив страхланнăшăн тӳленĕ срок пĕтеччен пыракан вăхăтшăн тӳлеççĕ. Тулли мар уйăхшăн взноса çулталăкри взносăн 1/12 чухлĕ—тулли уйăхшăн илнĕ пек илеççĕ.

§ 12. Авансра пухмали взноссене илсе пĕтернĕ хыççăн 2 кунлă срокра комсодăн пухнă укçана Госбанка, перекет кассине йе райфинанспайĕн кассине Госстрах счочĕ çине кĕртсе хума кайса памала тата авансра памали взноссене тӳленĕ çынсен спискине Госстрах инспекторне памала.

§ 13. Спискăсене илнĕ кунран пуçласа 15 кунлă срокран кайа йулмасăр малтан Госстрах инспекторĕн страхланас çĕре уйрăм çынсене тĕрĕс кĕртнине тĕрĕслемеле, вара коллектива страхлассине майлаштармала йе, çак правилăсене пăснисем пулсан, коллектив страхланнине йышăнмала мар.

Коллектива йе уйрăм çынсене страхлассине тĕрĕс мар майлаштарнă пулсан, Госстрах инспекторĕ комсод урлă тĕрĕс мар илнĕ укçасене уйрăм çынсене йе пĕтĕм коллектива, ăна страхлассине йышăнман пулсан, хăвăртăн таварса парассине организацилет.

§ 14. Госстрах инспекторĕ страхованине комсод, колхоз правлени, фабзавместком йе урăх обществăлă организацисен йачĕпе пĕтĕм коллектива пĕр страховкă свидетелстви парса майлаштарать тата кашни страхланнă çын валли пурнăçа коллективлăн страхлани тăрăх удостоверенисем (пĕр формăпа) çырса парать.

Госстрах инспекторĕ кашни удостоверени çине страхланнă çын авансра памали взноса тӳленĕ чухлĕ страховкă маркине çыпăçтарса парать, вăл удостоверенисем çине алă пусать, вĕсем çине тата пичет пусать те вĕсене кашни страхланнă çынна пама комсода парать.

§ 15. Страхланнăшăн черетлĕ взноссене илнĕ чухне комсод сборщикĕ страхланнă çынăн удостоверенийĕ çине тивĕçлĕ хаклă страховкă маркине çыпăçтарса парать. Çав вăхăтрах сборщик тӳлев спискĕ çине маркăсен контроллĕ талонĕсене çыпăçтарса хурать тата обйазателнă йĕркепе тӳлекенсене списăк çине маркăн контроллĕ талонĕ тăрăх алă пустарать.

Уйрăм пысăк коллективсенче унта Госстрах работникĕ пур пулсан, страхланнисене шута илессине тата страховкăн черетлĕ взносĕсене пухассине контроллĕ картăчкăсем тăрăх туса пыраççĕ. Вăл коллективсенче маркăсен контроллĕ талонĕсене контроллĕ картăчкăсем çине çыпăçтарса хураççĕ.

§ 16. Страховкă взносĕсене пухса пĕтернĕ хыççăн, комсод мĕн чухлĕ укçа пухни çинчен Госстрах инспекцине отчот тăратать тата тӳлев спискисене инспекцине парать, вĕсене унта йатарласа тунă делăра сыхласа усраççĕ.

ГОССТРАХĂН ОТВЕТЛĂХĔ

§ 17. Пурнăçа коллективлăн страхлани тăрăх Госстрах çакăн пек чухне пĕтĕм страховкă укçине тӳлет:

а) страхланнă çын хуть те мĕнле те пулин сăлтавпа вилнĕ пулсан;

б) страхланнă çын ăнсăртран пулнă майпа кăна хăйĕн ĕçлев пултарулăхне йаланлăхах тата пĕтĕмĕшпех (100 проценчĕпех) сухатнă пулсан.

Ăнсăртран пулнă майпа ĕçлев пултарулăхне кăшт кăна йаланлăхах сухатнă пулсан, Госстрах страхланнă çынна вăл хăйĕн ĕçлев пултарулăхне миçе процент сухатнă, çавăн чухлĕ процент страховкă укçи тӳлет.

§ 18. Ăнсăртран пулнă майпа йаланлăхах ĕçлев пултарулăхне миçе процент сухатнине, страхланнă çынна емел парса сыватас ĕçсем пĕтнĕ хыççăн, врач-експерт йе Врачсен Експертизин Бӳровĕ Госстрах инструкцийĕ тăрăх палăртать.

§ 19. Страхланнă çын пĕтĕмĕшле ĕçлев пултарулăхне, йаланлăхах сухатнишĕн кăна, вăл ăнсăртран суранланассинчен страхлани вăйра чухне пулнă пулсан, Госстрах ответ тытать. Професиллĕ ĕçлев пултарулăхне сухатнишĕн Госстрах ответ тытмасть.

§ 20. „Ăнсăртран пулнă" тесе сасартăк пулнă кирек йепле событисем те, вĕсем страхланнă çынăн ĕçлев пултарулăхне йаланлăхах сухаттарнă пулсан (инвалиднăç), шутланаççĕ, сăмахран илсен: писсе кайни, тăм илсе йани, мĕн те пулин ӳкнипе йе страхланнă çын хăй ӳкнипе сывсăрланни, усал шухăшлă çынсем йе выльăх-чĕрлĕхсем тапăнса сывсăрлатни, аçа çапнипе тата електричествă токĕпе аманни, машинсем йе механизмсем сийенлени, тĕрлĕ инструментсем сийенлени йе тата тĕрлĕ инструментсемпе усă курнă чух сийенленин, трамвай, автомобил, т. ыт те пырса çапнипе йе вĕсен крушенийĕ пулнă вăхăтра аманни, хĕвел çапни, сийенлĕ продуктăсемпе тата йапаласемпе сарăмсăр аманни тата сийенлĕ газсемпе сасартăк пăчăхса ӳкни т. ыт. те.

Ăнсăртран пулнисен шутне çавăн пекех тата хăранипе йе мĕнле те пулин урăх сарăмсăр майпа нервăсемпе психика тĕлĕшĕнчен чирленине те кĕртеççĕ.

Страхланнă çын хăйĕн ĕçлев пултарулăхне мĕнле те пулин урăх чирсенчен сухатнă пулсан, вăл службă ĕçне тунă чух пулнă пулин те, страховкă укçи тӳлемеççĕ. Страхланнă çын хăйĕн ĕçлев пултарулăхне сухатасси вăл преступлени тунă вăхăтра пулнă пулсан та çавăн пекех страховкă укçине тӳлемеççĕ.

§ 21. Страхланнă çын вăл хăйĕн страховкă укçине илме палăртнă çын тăрăшнипе вилнĕ пулсан, тата çавăн пекех страхланнă çынăн суртйĕрне йе вăл вилсен—страховкă укçине илме палăртнă çынăн суртйĕрне судпа конфискацилленĕ пулсан та, Госстрах страховкă укçи тӳлеместь.

§ 22. Ĕççыннисен коллективне страхланă май пулакан Госстрах ответлăхĕ пĕр хаклăн страхланма кăмăл панă работниксен составĕн 40 процентĕшĕн авансра тӳленĕ взноссене Госстрахăн счочĕ çине хывнă кунри 24-мĕш сехетрен пуçланать.

Пурнăçа коллективлăн страхласси çумне хушăнса страхланакан çынсемшĕн Госстрах ответ тытасси, хушăнса страхланакан çынсем взноса тӳленĕ чухне чирлĕ пирки илнĕ отпускпа усă курмаççĕ пулсан, комсод сборщикне авансра памали взноса тӳленĕ кунри 24-мĕш сехетрен пуçланать.

§ 23. Комсодран авансра памали взноса тӳленĕ çынсен спискине илнĕ кунран пуçласа 15 кунлă срокра Госстрах инспекцийĕ коллектива страхлассине майлаштармасть йе йышăнмастпăр тесе пĕлтермест пулсан, Госстрах счочĕ çине укçа хывнă кунран пуçласа коллектива страхласси пулса иртнĕ тесе шутланать, вара взнос тӳленисене пурне валли те страховкă удостоверенийĕсене памала.

§ 24. Коллектив пысăкрах хакпа страхланасси çине куçнă чухне Госстрахăн пысăклатнă хакри ответлăхĕ комсод Госстрах счочĕ çине пысăклатнă страховкă хакĕпе шутласа илнĕ пĕрремĕш взноса (аванса) тӳленĕ хыççăн, малтанхи страхованипе тӳленĕ взнос срокĕ тухнă кунран пуçланать. Кунта çакна асра тытмала: пысăклатнă страховкă хакĕшĕн Госстраха авансра памали взноса предприйатире, учрежденире, колхозра йе цехра, бригадăра т. ыт. ĕçлекен çынсен составĕнчен 40 проценчĕшĕн тӳлемеле, унтан кайа мар.

Коллектив йышăннă хисепе çити хăйсен страховкă хакне ӳстерекен уйрăм çынсемшĕн Госстрах ответ тытасси комсод сборщикне пĕрремĕш взноса (аванса) пысăклатнă страховкă хакĕнчен шутласа тӳленĕ хыççăн, вăл çынсем малтанхи страхованипе тӳленĕ взнос срокĕ тухнă кунран пуçланать.

§ 25. Страхланнă çын черетлĕ взноса вăхăтра тӳлемест пулсан, малтантарах тӳленĕ страховкă взносĕн срокĕ тухнă йулашки кунри 24-мĕш сехетрен пуçласа Госстрах ответлăхĕ пĕтет.

СТРАХЛАННА ÇЫНСЕНЕ ПАМАЛИ ЛЬГОТĂСЕМ

§ 26. Ватăлнă йе аманнă пирки инвалида тухнă страхланнă çынсем, коллектив страхланнине пăхмасăр, вĕсем ĕçрен тухса кайас умĕн страхланнă хакпа страховкă çулĕ пĕтичченех тата вĕсем ĕçре чухне пĕр татăлмасăр миçе çул страхланнă, çавăн чухлĕ хăйсем страхланассине тăсма пултараççĕ. Страхланнă çын инвалида куçнă страховкăлă çул ĕçре чухне страхланнă вăхăт шутне кĕрет. Страхланнă инвалидсем хăйсен страховкин черетлĕ взносĕсене хăйсем инвалида тухиччен страхланнă коллективăн комсочĕ урлă, йе Госстрах инспекцийĕ кăтартса панă кредитлă учрежденине тӳлесе тăраççĕ.

Коллективра ĕçлеме урăх сăлтавсемпе (инвалида куçнă пирки мар) пăрахнă страхланнă çынсем хăйсем страхланассине, страхланнин стажне пăхмасăр, малтан ĕçленĕ вырăнта пĕр татăлмасăр страховкă çулĕ пĕтиччен, унтан тата тепĕр çуллăха тăсма пултараççĕ.

§ 27. Страхланнă çынсем, вĕсем чирленĕ пирки отпускра пулнă чухне хăйсен черетлĕ страховкă взносне тӳлейместĕ пулсан, коллектив страхланнине пăхмасăр, пĕтĕм отпуск вăхăтĕнчех страхланнă шутланаççĕ, анчах малтан тӳленĕ страховкă взносĕн срокĕ тухнă йулашки кунран пуçласа 4 уйăха çити кăна. Отпускран килнĕ хыççăн страхланнă çынăн срок тухнă пур взноссене те малтанхи хут шалу илсенех, анчах ĕçе тытăннă кунран пуçласа пĕр уйăх иртеччен, тӳлесе татмала. Вăрăмăн чирленĕ чухне çӳлте асăннă 4 уйăхлă срок иртнĕ хыççăн, тӳлемесĕр йулнă взноссене страхланнă çынăн йе вăл хушнипе камăн та пулин урăххин çавăн пекех пĕр уйăхлă срокран кайа йулмасăр тӳлесе татмала.

Чирленĕ пирки отпуска кайнă кун страхланнă çынăн страхованийĕ вăйра (срок иртмен) пулнă пулсан кăна, вăл çак льготăпа усă курать.

Чирленĕ вăхăтра страхланнă çын инвалида куçать пулсан, унăн инвалида куçнăранпа пĕр уйăх хушшинче срок тухнă тӳлевсене парса татмала тата малашне те черетлĕ страховкă взносĕсене вăхăтра тӳлесе пымала.

Памасăр йулнă взноссене çӳлте кăтартнă сроксенче тӳлесе татмасан, страховани пĕтет, страхланнă çын хăйĕн страхованине тăсас правана—тепĕр хут ĕçлеме тытăначчĕнех сухатать.

§ 28. Пĕр çул ытларах пĕр татăлмасăр страхланнă чухне, ăнсăртран пулнă майпа ĕçлев пултарулăхне сухатнишĕн страховкă укçи çумне 25 процент хушса параççĕ, пĕр татăлмасăр икĕ çул ытларах страхланнă чухне çак правилăсен 17-мĕш § тăрăх шутласа кăларнă хисепрен 50 проценчĕ чухлĕ хушса тӳлеççĕ.

Пĕр татăлмасăр страхланнин вăхăтне (страхланнин стажĕ) кирек кам коллективлăн страхланнă малтанхи кунран пуçласа ăнсăртран пулнипе аманнă куна çити шутласа тупаççĕ. Страхланассинче перерывсем пулнă пулсан, страхланнин стажне йулашки перерыв хыççăн страхланнă вăхăтран пуçласа ăнсăртран аманнă куна çитиччен шутласа тупаççĕ.

СТРАХОВКĂ УКÇИНЕ ТӲЛЕССИ

§ 29. Страхланнă çын вилсен, страховкă укçине страхланнă çын хăйĕн зайавленинче кăтартнă çынна тӳлеççĕ. Ун пек çынна кăтартман пулсан, страховкă укçине страхланнă çынăн граждăнла кодексра кăтартнă саккунлă наследникне тӳлеççĕ.

Ăнсăртран пулнă майпа ĕçлев пултарулăхне йаланлăхах сухатнă пулсан, страховкă укçине страхланнă çынна хăйнех тӳлеççĕ.

Ĕçлев пултарулăхне сухатнăшăн страховкă укçине страхланнă çын пурăннă чухне тӳлемен пулсан, ăна вăл вилсен те тӳлемеле мар.

§ 30. Страховкă укçине илме Госстрах инспекцине çакăн пек документсем тăратмала:

а) страхланнă çынăн страховкă удостоверенийĕ;

б) страхланнă çын вилни çинчен ЗАГС панă свидетелствă; ĕçлев пултарулăхне сухатнă пулсан, ăнсăртран пулнă ĕç çинчен кăтартакан актăн йе протоколăн копине йе тата страхланнă çын ăнсăртран пулнă майпа аманнине ĕнентерекен урăх документ тăратмала.

ЗАГС свидетелстви çинче мĕншĕн вилнине кăтартман пулсан, страхланнă çын вилнин сăлтавĕ çинчен врач панă справкăна тăратмала. Черетлĕ взноса тӳлемен чухне, ĕçленĕ вырăнтан страхланнă çын мĕн чухлĕ вăхăт чирлĕ пирки отпускра пулни çинчен справкă тăратмала.

Страховкă укçине илнĕ чухне илекенĕн хăйĕн паспăртне кăтартмала.

Асăрхаттарни: Çӳлте асăннă пур документсене те Госстрах инспекцийĕ расписка парса илет те инспекцирех хăварать. Ĕçлев пултарулăхне сухатнă чухне страховкă удостоверенине страхланнă çынна таварса параççĕ.

§ 31. Вилнĕшĕн йе ĕçлев пултарулăхне сухатнăшăн тӳлекен страховкă укçинчен страховкă çулĕ пĕтиччен илсе татăлман страховкă взносĕсене тытса йулаççĕ.

§ 32. Ĕçлев пултарулăхне сухатнăшăн страховкă укçи тӳленĕ пулин те, страхланнă çын страховани вăйра чухне вилсе кайсан, уншăн страховкă укçине, пĕтĕмĕшпех тӳлеççĕ.

§ 33. Страховкă укçине тӳлеме ыйтса çырнă требованине страхланнă çын ĕçленĕ вырăнта йе страховкă укçине илекен çын пурăннă вырăнта Госстрах инспекцине страхланнă çын вилнĕренпе йе вăл ăнсăртран аманнă вăхăтран пуçласа 2 çултан кайа йулмасăр малтан тăратмала. Çав срок иртсен кăтартнă претензине пурнăçа кĕртмеççĕ.

§ 34. Хулари тата районри Госстрах инспекцисем тĕрĕс мар туни çинчен жалăбăсене вырăнти, республикăри, крайри облăçри Госстрах управленине йамала, вĕсен решенипе те килĕшмесен—Сойузлă республикăсенчи Госстрах управленине йамала.

Сойузлă республикăсенчи Госстрах управленисен решенийĕсем çинчен çырнă жалăбăсене ССР Сойузĕнчи Госстрахăн Тĕп управленине, Мускава йама йурать.

Госстрахăн Тĕп управленин начальникĕ А. Власов.

„Чăваш коммунĕ" çырăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 5 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 25. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2. Тираж 14.500. 53—52 см. 1—1 п. л.